24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
21
КĔҪНЕРНИКУН
196 (5911) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Горючисене перекетлĕ тытмалла

Совет халăхĕ этемлĕхĕн хаяр тăшманне — Германи фашизмне хирĕç туса пыракан отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче перекетлĕхшĕн кĕрешесси уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăрăн пĕтĕм ĕçе вăрçă интересĕсене пăхăнтарас пулать. Халĕ кашни машинно-тракторнăй станцин горючисене перекетлеме тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен, перекетлесе хăварнă кашни килограмм горючи пирĕн геройла Хĕрлĕ Çарăн ыйтăвĕсене витме, унăн çапăçу вăйне тĕреклетме пулăшать.

Хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек улăштарса çĕнетнĕ машинно-тракторнăй станцисенче халь горючисене тата машина пайĕсене ытларах та ытларах перекетлесе хăварассишĕн кĕрешӳ пуçарса ячĕç. Трактористсем, бригадирсем, комбайнерсем, механиксем тракторпа ĕçлемелли плана тулларассишĕн кăна мар, горючисене перекетлес задачăна та çивĕччĕн лартаççĕ. Ку тĕлĕшпе Шăхасанти машинно-тракторнăй станци уйрăмăнах пысăк ӳсĕм турĕ. Вăл 1941 çула кĕнĕренне 27.144 тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварнă. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ Пĕчĕк кĕмĕл медальпе наградăланă Николай Чернов тракторист çурхи ĕçсене тунă чухне «СТЗ-НАТИ» тракторпа ĕçлесе кашни гектар пуçне 1,7 килограмм горючи перекетлесе пынă. Çавăн пекех Н. Якимов тракторист та «СТЗ-НАТИ» тракторпа суха тунă чухне 112,5 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Комсомольскри машинно-тракторнăй станцинчи тракторист Смирнов юлташ çуракки тунă вăхăтра кашни гектар пуçне 800-шер грамм, Хĕрлĕ Чутайри машинно-тракторнăй станцин трактористĕ Моложин юлташ 500-шер грамм горючи перекетленĕ.

Çакăн пек паха тĕслĕхсене кашни машинно-тракторнăй станцинчех курма пулать. Çурхи ĕçсене тума тытăннăранпа Улатăрти машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем — 1.732 тенкĕлĕх, Вăрнар — 5.935 тенкĕлĕх, Йĕпреç — 4.503 тенкĕлĕх, Пăрачкав — 9.324 тенкĕлĕх, Вăрмар — 5.659 тенкĕлĕх, Шăмăршă — 17.736 тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварнă.

Горючи перекетлес тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен трактористсенчен кашни тракторист пример илмелле. Вĕсен паха опычĕсемпе анлăн усă курма тăрăшмалла.

— Горючисене перекетлесси, — тет Çĕрпӳри машинно-тракторнăй станцин трактористĕ Михайлов юлташ, — карбюратора тĕрĕс пăхса тăнинчен нумай килет. Эпĕ ăна инструкци хушнă тăрăх пăхса, майлаштарса тăратăп. Клапансене вăхăтра питĕрсе хуратăп. Бензин, краççын тата ытти таврашсене усăсăр тăккаласа пĕтерместĕп. Паллах, горючисене перекетлесе тытасси техникăна лайăх пĕлнинчен нумай килет. Çавăнпа та, çамрăк трактористсене техникăна вĕрентесси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ. Руль тытса пыракан кашни тракторист хăйĕн машинин мĕнле çитменлĕхсем пурринне вăхăтра туйса илтĕр, вăл кăтăксене сийĕнчех тӳрлетме пултартăр.

Хальхи вăхăтра «Нумайрах ĕçлемелле, горючи сахалтарах тăкăламалла» текен лозунг машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлекен работниксемшĕн боевой лозунг пулса тăмалла. Государство интересĕсемшĕн, фронт ыйтнисене туса пырассишĕн тăрăшасси машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла. Халĕ хитре сăмахсемпе, резолюцисемпе, шантарса халанисемпе никама та улталамăн. Кашни руководителе унăн ĕçне кура хакласçĕ. Ĕçе организацилеме пултарайман сӳпĕлтисене руководствăран сиреççĕ. Вĕсем вырăнне пултаруллă тата пуçарулле работниксене улăштарса лартас пулать.

1941 çулти апрель уйăхĕнче Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Калинино районĕсем 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене тума социализмлă ăмăрту договорĕ турĕç. Çак договор тăрăх, кашни район хăй çине татăклă обязательствăсем илнĕ. Машинно-тракторнăй станцисем тăрах, горючисене 15 процент, сĕрмолли материалсене 15 процент, ĕçĕн хăйне ларакан хакне 6 процента çити чакарма йышăннă. Çак обязательствăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Вăрçă вăхăтĕнчи условире тăван çĕршыв интересĕсем кашни машинно-тракторнăй станцине, трактор бригадине, кашни тракториста тата комбайнера горючине перекетлĕрех тытма хушаççĕ.

Машинăна юратса, типтерлĕн пăхни, механизмсене тĕрĕс йĕркелесе пыни шĕвĕ топливăна перекетлеме май парать. Трактористсен тракторсене вырăнтан вырăна пушă илсе çӳрессине чакарас пулать. Тракторсене заправка тунă чухне горючие усăсăр сая ярасран сыхланмалла.

Горючисене перекетлĕн тытас тени вăл — машинно-тракторнăй станцисенче горючи хуçалăхне йĕркене кĕртме кирлине те пĕлтерет. Нефтебазăсенче тата трактор бригадисенчи йĕркесĕрлĕх тата тракторсене алăпа заправка туни, нефтепродуктсене расходлас ĕçри учета юхăнтарса яни—вĕсем пурте горючисене типтерсĕр расходласси патне илсе пыраççĕ. Стахановец-трактористсен рационализаторла шухăшĕсем халĕ хаклă тăракан горючине ытларах перекетлесе хăварас енĕпе пулса пымалла. Чылай машинно-тракторнăй станцисенче горючи хуçалăхне йĕркене кĕртес тĕлĕшпе большевикла кĕрешме тытăнчĕç. Бригадăсенче тракторсене заправка тăвассине механизацилесе пыраççĕ.

Анчах, çакă вăл горючисене перекетлес тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешме тытăннин пуçламăшĕ çеç-ха. Шĕвĕ топливăна перекетлес тĕлĕшпе пĕтĕм резервсемпе туллин усă курма вĕренмелле. Çак резервсем — горючи хуçалăхĕсене йĕркеллĕ тытса тăни, тракторсен паркне техника енчен пăхса тăмалли правилăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыни, хăшпĕр тракторсене хытă топливо çине куçарса пыни, горючисене шутсăр çунтаракансене хирĕç çирĕппĕн кĕрешни, рационализаторла мероприятисене хăюллăн пурнăçа кĕртсе пыни тата малта пыракан тракторист-стахановецсен паха опычĕсемпе анлăн усă курни пулать.

Юлашки вăхăтра трактористсемпе комбайнерсен çарĕ çĕршер çамрăк хĕрсен шучĕпе ӳсрĕ. Çамрăк механизаторсем пĕтĕм вăя çĕнĕ профессие алла çавăрса илес çĕре хурса ĕçлеççĕ. Машинно-тракторнăй станцисенчи руководительсен задачи — çак çамрăк кадрсене стахановецсен паха опычĕсемпе ĕçлеме тата горючисене перекетлеме куллен вĕрентсе пырасси пулать.

Трактористсем, бригадирсем, комбайнерсем, механиксем, машинно-тракторнăй станцисенчи нефтебазăсенче ĕçлекен работниксем, эпир перекетлесе хăварнă кашни тонна горючи тăшмана хăвăртрах çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшать! Йăлтах фронт валли, йăлтах ирĕр тăшмана çĕнтерме мобилизацилер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 19-мĕшĕ хушшинче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, уйрăмăнах Кингисепп, Новгород, Гомель тата Одесса енĕсенче вăйлă çапăçусем пулнă.

Тĕплĕн палăртнă тăрăх, августăн 17-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 22 самолет мар, 28 самолет персе ӳкернĕ.

Августăн 17-мĕшпе 18-мĕш хушшинче пирĕн самолетсем Плоешти çине бомбăсем пăрахнă, летчиксем пысăк пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине курнă.

Августăн 18-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне 30 самолет персе ӳкернĕ. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ. Хура тинĕсре пирĕн бомбардировщиксем противникăн икĕ транспортне путарнă тата пĕр транспортне вут тивретсе ячĕ.

* * *

Капитан Савицкий юлташ ертсе пыракан красноармеецсен отрячĕ тăшманăн П. ялĕнче вырнаçнă штабне тупса палăртнă. Каç пуласса кĕтсе илсе, отряд штаб çине кĕтмен çĕртен тапăннă та тăшманăн 50 автомашинине тата вунпăр салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтерсе тăкнă. Савицкий юлташ фотоаппаратсем, секретлă карттăсем тата штабри ытти хаклă документсене нумай ярса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен пысăк отрячĕ пирĕн ротăсенчен пĕрин çине наступлени туни. Çапăçура рота командирĕ стройран тухнă. Политрук Холивенков ротăна ертсе пыракан çăй çине илсе красноармеецсене контратакăна илсе кайнă. Боецсем тăшмана каялла хăваласа янă, тăшманăнне пĕр танк, икĕ противотанковăй оруди, пысăк калибрлă икĕ пулемет, 8 автомашина тата 120 салтака пĕтерсе тăкнă. Кăнтăрла çиртсен нимĕçсем каллех наступлени тума пуçланă. Анчах иккĕмĕш атака та нимĕçсемшĕн хакла ларнă. Холивенков юлташăн роти пĕр гаубица, автомашина, 15 мотоцикл тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старший лейтенант Иркутовăн роти Д. местечки районĕнче разведка туса çапăçнă. Нимĕçсен сторожевой охранине вĕлерсе пĕтерсе, красноармеецсем тăшман тылне кĕрсе кайнă, унăн огневой точкисем ăçта вырнаçса тăнине палăртнă тата темиçе салтака тытăнса илсе тухнă. Хăйсен оборонин линийĕ патне чакнă чухне ротăн сержант Стрючков ертсе пыракан пĕр отделенийĕ нимĕçсен танковăй роти вырнаçса тăнă çĕре пырса лекнĕ. Тăшман хăраса ӳкнипе усă курса, красноармеецсем уçă тăракан люксене гранатăсем ывăтса виçĕ танка стройран кăларнă. Нимĕçсен 100 мотоциклистран тăракан отрячĕ ротăна çавăрса илме хăтланнă, анчах вăл ăнăçсăр пулнă. Красноармеецсем питех те лайăх пытанса ларса нимĕçсене малалла иртнерсе янă, вара вĕсене тылран пырса çапнă. Фашистсен мотоциклисчĕсене пурне те пекех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Н-ски чăсри кĕçĕн лейтенант Змиевский ертсе пыракан разведчиксен группи хăюллăн çапăçать. Çак кунсенче разведчиксем нимĕç автоматчикĕсен группине йĕрлесе тупса пĕтерсе тăкнă, çавăн чухне виçĕ мотоцикл тата 7 автомашина ярса илнĕ.

* * *

Винница облаçĕн нимĕçсен фашистла войскисем ярса илнĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсем тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. МТС механикĕ Т. юлташ ертсе пыракан отряд Винницăпа Бердичев хушшинчи телеграф тата телефон линине юсама хăтланнă нимĕç ротин салтакĕсем çине темиçе хут тапăннă. Фашистсен 70 салтакне тата сыхăну инженерĕсене вĕлернĕ. Темиçе телеграф аппаратне, радиостанцине, проводсемпе аккумуляторсем тиенĕ 5 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Августăн 14-мĕшĕнче партизансем нимĕçсен горючи тиенĕ автомашинисен колоннине чарса тăратнă. Хӳтлесе пыракан салтаксемпе шоферсене пĕтерсе тăкса, отряд боецĕсем цистернăсене çунтарса янă. Вутра 18 автомобиль çунса кайнă.

Районри сыхăну пайĕн заведующийĕ Д. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ Литинпа Винница хушшинчи шоссе çулĕн районĕнче 10 кун хушши кĕрешнĕ. Çав вăхăт хушшинче отряд противникăн хĕçлăшал туртта-ракан 4 обозне, бензин тултарнă 14 цистернине тытса илнĕ тата пĕтерсе тăкнă. Бензин тултарнă икĕ цистернăна партизансем вăрмана илсе кайса пытарнă та партизансен 9 отрядне фашистсен танкĕсене хирĕç кĕрешме горючи парса янă. Ялсовет исполкомĕн председателĕ В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд августăн 10-мĕшĕнче вăрмана партизансенчен тасатма хăтланнă нимĕçсен подразделенине хирĕç çапăçăва тухнă. Партизансем нумай нимĕçсене пĕтерсе тăкнă. Вăрманта нимĕçсен 90 салтакĕн вилли выртса юлнă. Р. местечки патĕнче отряд нимĕçсен фронт патнелле пыракан зенитнăй пулеметсен батарейи çине тапăннă. Батарея прислугине вĕлерсе пĕтерсе, партизансем 6 зенитнăй пулемета çĕмĕрсе тăкнă, икĕ пулеметне патронсен пысăк запасĕпе пĕрле хăйсем валли илсе кайнă. Августăн 13-мĕшĕнче отрядри боецсем зенитнăй пулеметсенчен персе нимĕçсен пысăк автоколоннине çапаласа янă. Августăн 14-мĕшĕнче партизансем фашистсен 3 самолечĕ çине шенĕ. Пĕр самолетне сиенленĕ, вăл вара çĕр çине персе аннă.

* * *

Германипе Итали войскисем тытса илнĕ Грецин Крит ятлă утравĕ çинче партизансен кĕрешĕвĕ ăнăçлăн сарăлса пырать. Партизансем валли хĕçпăшал пырса паракан Греци парусникĕсен капитанĕсем Критăн кăнтăр çыранĕнчи ăшăх вырăнти нумай йышлă портсемпе усă кураççĕ. Ку портсем патне Германипе Итали çар карапĕсем пыма пултараймаççĕ. Повстанецсен диверсиллĕ групписем Ханья портне пынă та нимĕçсем утрав çинче çаратса пухнă олив çăвне тултарнă складсене вут тивретнĕ. Греци территорийĕ çинче кĕрешекен партизанла отрядсем нимĕçсемпе итальянецсен К. хулинчи гарнизонне атакăланă. Фашистсен войскисем хăраса ӳксе хуларан тухса тарнă. Партизансем хĕçпăшалсен пысăк запасĕсене тытса илнĕ. Грецири нумай пин патриотсем партизанла отрядсем ретне тăрса, фашислла оккупантсене хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ.

* * *

Тыпулсене пухса кĕртсе тата государствăн умĕнчи обязательствăсене пурнăçласа нумай колхозсем кĕрхи тырăсене акма тытăнчĕç. Фрунзе облаçĕнчи Калинино районĕнче кĕрхи тырăсене 1200 гектар çинче акнă та ӳнтĕ. Ростов облаçĕнчи Вешенски, Верхнедонск районĕсенче тата ытти сенче те кĕрхи тырăсене акма тытăннă. Вешенскинчи колхозсем, кăçалхи çӳл кĕрхи тулла гектартан 200 пăт пухса илсе, кĕрхи тырăсем акăнакан çĕр лаптăкне ӳстереççĕ. Матвеево-Курган районĕнчи «Победа» колхоз кĕрхи тырăсене 1000 гектар акса хăварма йышăннă, планпа 800 гектар акма палăртнă пулнă. Башкиринче кĕрхи акана массăллăн тухнă. Стерлитамак районĕнче кĕрхи тырăсене çуррине яхăн акнă ӳнтĕ. Запорожье облаçĕнчи Ново-Троицк, Геническ, Приазовски, Больше-Токмак т. ыт. районĕсенче кĕракине тухма хатĕрленес ĕç анлăн сарăлса кайнă. Ново-Троицк районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозри трактористсем Савченкопа Глущенко юлташсем ХТЗ тракторпа пĕр сменăра 10—11 гектар сухăлаççĕ, 15—20 килограмм горючи перекетлесçĕ. Михайлово-Лукашевски машинно-тракторнăй станцинчи комбайнерсем И. Синевский тата Д. Лиходер юлташсем кăнтăрла комбайнпа тырă выраççĕ, çĕрле кĕртыррисем акмалли çĕре сухалаççĕ. Кĕрхи тырăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварса, колхозниксем Совет çĕршывĕн çар хăватне ӳстереççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă, Новгород тата Гомель енĕсенче уйрăмах вăйлă çапăçусем пынă.

* * *

Сывлăша сăнакан постсем Н-ски соединенин командованине фронтăн кăнтăр-хĕвеланăç енче нимĕçсен транспорт самолечĕсен группи, «Мессершмиттсем» хӳтлесе пынипе, О. хулин районĕ патнелле кайни çинчен пĕлтернĕ. Старший лейтенантăн Егорушкинăн подразделенийĕ çийĕнчех сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Пирĕн истребительсене курнă хыççăн, тăшман самолечĕсем икĕ группăна уйăрăлнă та, тĕрлĕрен еннелле кайнă. Совет истребителĕсен пĕр звени çурçĕр-хĕвелтухăçнелле кайнă группăн çулне пӳлме тӳрĕн вĕçнĕ. Пилот кĕçĕн лейтенант Лыков пĕр «Мессершмитта» персе ӳкернĕ тата нимĕçсен 4 моторлă «Ю-52» самолетне атакăланă. Противник патне хыçалтан вĕçсе пырса, Лыков юлташ фашистсен стрелок-радистне стройран кăларнă. Унтан çӳле вĕçсе хăпарса, Лыков юлташ противник самолечĕн пилочĕне штурманне çӳлтен пенĕ. Управленине çухатнă пирки, тăшман машини аялалла татăлса аннă. Летчик-истребительсем Антоненкопа Яковлев юлташсем икĕ «Мессершмитта» тата пĕр «Юнкерса» персе ӳкернĕ. Пĕрремĕш группăри ытти самолетсем каялла тарнă. Фашистла самолетсен иккĕмĕш группине Шульженко, Мошков тата Правдин летчиксем атакăланă. Икĕ «Юнкерс» çухатса, нимĕçсем хĕвеланăçнелле кайнă. Персе антарнă «Юнкерссем» пурте экипажсемпе пĕрле танкеткăсем çĕклесе пынă пулнă.

* * *

Н-ски батальонăн командирĕ майор Гнедин хăйĕн личнăй примерĕпе кашни красноармееца тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне хăюллă, пуçарулле тата тавăрулле пулма воспитани парса вĕрентсе пырать. «Хăюллă боецшăн танк хăрушă мар»—Гнедин юлташăн çак лозунгне батальонри мĕнпур боецсем ăнланса илнĕ. Нимĕç машинисен вăйăр енĕсене вĕсем кашни кунах практикăра сăнаса вĕренеççĕ тата тăшмана сиçĕмлĕлех çухатусем кӳреççĕ. Броняна шăтаракан пулясемпе перекен патронсем, гранатăсен çыххисем, горючи тултарнă бутылкăсем—красноармеецсен аллинче хăрушă хĕçпăшал пулса тăнă. Вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра пĕр уйăх хушшинче Гнедин майорăн батальонĕнчи боецсем нимĕçсен 104 танкне пĕтерсе тăкнă. Танксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте боецсем Рузавин, Кучеренко, Болотов тата Веденеев юлташсем хăйсен хăюллăхĕпе, тимлĕхĕпе тата шиксĕрлĕхĕпе уйрăмах палăрса тăраççĕ. Рузавинпа Кучеренко красноармеецсем горючи тултарнă бутылкăсемпе питех ăстан усă кураççĕ. Августăн 10-мĕшĕнче вĕсем 2 танка, августăн 12-мĕшĕнче пĕр танка, августăн 13-мĕшĕнче 3 танка, августăн 15-мĕшĕнче 2 танка вут тивертсе çунтарнă. Окопа кĕрсе ларса курăкпа тата туратсемпе витĕнеççĕ те, вĕсем танка 15—20 метр сывăха пыма май параççĕ, вара танкăн мотор отделинийĕ çине 2—3 бутылка ывăтаççĕ. Рузавинпа Кучеренко юлташсем нимĕç машинисене хирĕç вăрманта ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Августăн 15-мĕшĕнче вĕсем çĕмĕрнĕ 3 танк ывăçсем тăрринчен пăрахнă бутылкăсенчен вут тивсе илнипе çунна пуçланă. Болотовпа Веденеев боецсем пĕр уйăх хушшинче 9 танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар енне тарса каçнă нимĕç офицерĕсен группи Германи çарĕнчи мĕнпур офицерсем патне уçă сыру сырнă. Хăйсен сырăвĕнче нимĕç офицерĕсем çапла сыраççĕ: «Пирĕн нимĕç тăван çĕршывĕн пуласлăхĕ пирки хыттăн шухăшласа, эпир хамăрăн мĕнпур юлташăмăрсене тата пĕтĕм нимĕç çарĕнчи мĕнпур нимĕç офицерĕсене çапла чĕнсе калассине хамăрăн тивĕçлĕхпе чыслăх тесе шутлатпăр: пурте пĕр шухăшлă пулса эпир çакна çирĕппĕн ĕненетпĕр: Германи çинчен унăн историнче халиччен пулман пысăкран та пысăк катастрофăна сирсе ярас тĕлĕшпе пирĕн, нимĕç офицерĕсен, пурне те тăвас пулать. Нацистсем вĕсем—пӳтĕр авантюристсем пулнине, вĕсем тĕттĕм ĕçсемпе сыхăнса тăнине эпир пĕлнĕ. Вĕсемшĕн Германия хăйсен личнăй карьерине тумалли трамплин кăна пулнă. Темĕнле Гитлер е Геринг умĕнче пуçа каçăртса тăма пире намăсчĕ. Пирĕн тăван çĕршыв умне Гитлерăн авантюристла политики хăрушлăх кăларса тăратни пирĕншĕн ытларах та ытларах палăрса пычĕ. Вăрçă çывхарса пычĕ, Германин вара туссем пулман. Нацистсене пĕтĕм тĕнче кураймасăр тăнă, çак курайманлăх вара Германи çине куçса пычĕ. Фашистла Италипе союз туни—çакна çеç тума пултарчĕ Гитлер. Анчах Италие эпир çителĕклех лайăх пĕлсе тăнă. Германин икĕ фронтпа вăрçассинчен тем пулсан та хăтăлма тăрăшмалла пулнă. Бисмарк пек государственнăй деятель çакна тума пултарнă пулĕччĕ, анчах Гитлер—Бисмарк мар, ăнсăртран сиксе тухнă çын. Унăн пĕтĕм политики те ултав çинче тытăнса тăнă. Вăл пире те улталанă, çавăн пекех вăл пĕтĕм тĕнчене те улталама шутланă. Çакăн результачĕсем вара питех те начар пулчĕç. Халĕ эпир Антлие хирĕç те, Российăна хирĕç те вăрçатпăр. Çакă вăл чăннипех те ăссăр хăтланни пулать. Российăна хирĕç пыракан вăрçăра Германи çарĕ ик ютхарса вилсе пĕтет. Çак вăрçăн пуласлăх çук. Вăл катастрофăпа кăна пĕтме пултарать, çав катастрофăпа танлаштарсан, 1918 çулти катастрофа ача вăйăри çеç пулса тăрать. Германи хăшпĕр вăхăтлăха вăрçма пултарĕ тен, анчах вăрçă мĕн чухлĕ вăраха каять, унăн вĕçĕ çавăн чухлĕ хăрушăрах пулать. Хамăрăн сăмахсемшĕн пĕтĕм ответлăха илсе, эпир сире çапла калатпăр: Гитлера сирпĕтсе антарнă хыççăн кăна вăрçă пĕтме пултарать тата Германи çăлăнса юлать. Хамăрăн çак шухăшшăн эпир хамăрăн ятпа тата хамăр немĕç офицерĕсем пулнă чыслăхпа ответ тытатпăр».

Возвани çине çаксем алă пуснă: подполковник Гаушильд, капитан Лоевский, капитан Риггер, старший лейтенант фон-Вешновский, старший лейтенант Рикс.

* * *

Хĕрлĕ Çара хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче нимĕçсен фашистла войскисем питех те пысăк сухату тунă пирки гитлеровецсен çĕршер пин çынсене çĕнĕрен те çĕнĕрен армине илме тивет. 17 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ арçынсене пурне те пекех мобилизацилени Германи халăхне хăратать. Лотарингири çамрăк нимĕçсем Франçин оккупацилемен территорине массăллăн тараççĕ. Лотарингири фашистсен заправили Дюрхель приказ тăрăх, оккупацилемен Франçине туса тарнă, призыв çулне çитнĕ лотарингецсен ашшĕ-амăшĕсене пурне те концентрацилле лагерьсене хупаççĕ. Германи çарне каяссинчен пăрăнакан çамрăксен ашшĕсемпе амăшĕсем валли Германире икĕ çĕнĕ лагерь тăваççĕ.

* * *

Совет çĕршывĕн связисчĕсем гитлерла çынçиенсен кĕтĕвĕсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара паттăрăн пулăшаççĕ. Украинăри линейно-технически узелсенчен пĕрин начальникĕ Мех юлташ, хăйĕн колоннипе пĕрле, çапăçусен районне 42 хут кайса килнĕ, командованипе войскăсен чăсĕсем хушшинчи сыхăнăва кирлĕ пек йĕркеленĕ. Тăшман йышăннă вырăнсем витĕр кĕрсе кайса, Мех юлташ немĕçсем çавăрса илнĕ Б. пунктĕнчен телефонпа телеграфăн хаклă оборудованийĕсене пурне те турттарса тухнă.

Рабочи-связист Чередниченко юлташ фашистсен тылĕнче разведчиксен отрядне организацилеленĕ, вăл отряд пирĕн чăссене валли тăшман çинчен паха сведенисем тăратнă. Районри сыхăну конторин начальникĕ Мазур юлташ немĕçсен чăсĕн штабĕ ăçта тăнине разведка туса палăртнă, вара ун çинчен пирĕн командованине пĕлтернĕ. Штаба çĕмĕрсе тăкнă. Линейнăй участокăн начальникĕ Родионов юлташ, тăшман артиллерийĕн персе тăнине пăхмасăр, пирĕн войскăсене тăтăшах сыхăнса тăма май туса панă.

Фронт çывăхĕнче кăна мар, тата инçетри тылра та патриот-связистсем çĕнĕлле ĕçлеççĕ. Хабаровскри радиоаппаратура связист-инженерĕ Орлов юлташ, техниксемпе Мальцев тата Поляков юлташсемпе пĕрле, питех те кирлĕ заданине 5 кун хушшинче пурнăçа кĕртнĕ, норма тăрăх икĕ эрне ĕçлемелле пулнă. Мускав хулинчи телефон линийĕсен ремонтнăй конторинчи главнăй инженер Постников юлташ пĕр ĕçе темиçе кун хушшинче пурнăçа кĕртнĕ, вăл ĕçе тума мирлĕ вăхăтра темиçе уйăх кирлĕ пулнă.

ССР Союзĕн Верховнăй Главнăй Командованийĕпе Польшăн Верховнăй командованийĕ хушшинче вăрçă тĕлĕшпе тунă килĕшӳ

Совет Союзĕпе Польша хушшинчи кăçалхи июлĕн 30-мĕшĕнче тунă Килĕшӳ тăрăх, кăçалхи августăн 14-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕн Верховнăй Главнăй Командованийĕпе Польшăн Верховнăй Командованийĕ хушшинче вăрçă тĕлĕшпе килĕшӳ тунă. Килĕшӳ çине ССР Союзĕ енчен ССР Союзĕн Верховнăй Главнăй Командованийĕн Уполномоченнăйĕ генерал-майор А. Василевский, Польша енчен Польшăн Верховнăй Командованийĕн Уполномоченнăйĕ — генерал-майор С. Богуш Шишко алă пуснă.

Польшăн ССР Союзĕн территорийĕнчи çарĕн командующийĕ пулма Польшăн хĕçпăшаллă вăйăсен главнокомандующийĕ г. Сикорский Андерс генерала уйăрса лартнă. Генерал Андерс Польша çарне йĕркелеме тытăннă.

Монгол Халăх Республикипе Манчжоу-Го хушшинче 1939 çулта конфликт пулса иртнĕ районри вырăнти чикĕне тĕплĕн палăртса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен хутăш комисси пĕрле панă коммюнике

Монгол Халăх Республикипе Манчжоу-Го хушшинче 1939 çулта конфликт пулса иртнĕ районри вырăнта государство чикĕпе тĕплĕн палăртса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен хутăш комиссин 1941 çулти июнĕн 27-мĕшĕнче пуçланă хирти ĕçĕсене 1941 çулти августăн 15-мĕшĕнче пĕтĕмпех туса çитернĕ. Çак ĕçе вĕçлесе çитерекен тĕрлĕрен документсене туса хатĕрлеме икĕ енĕн уполномоченнăйĕсем те кăçалхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче Харбин хулинче тĕл пулма каласса татăлнă.

Харат-Улайн-Обо (хирти ĕçсен районĕнчи пункт), 1941 çулти августăн 20-мĕш.

Совет самолечĕсем Берлин районĕ çине пырса тапăнни

Августăн 18-мĕшпе 19-мĕш хушшинче çĕрле совет самолечĕсем Берлин районĕ çине пырса тапăннă. Берлинри çарпа промышленность объекчĕсем çине вут чĕртекен тата фугаслă бомбăсем пăрахнă. Берлинра пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине сăнанă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен базисене тавăрăннă.

Икшер норма тăваççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Палапуç Пашъел ялсоветĕнчи «Комсомолец» тата «Пионер» колхозсен уйăрăсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. «Комсомолец» колхоз членĕсем кĕртыррисене 5 кун хушшинче вырса пĕтересшĕн кĕрешĕç. Колхозри ударниксем М. Тярова, П. Мешкова, Н. Шавикова, С. Соколов, Е. Оспова тата А. Федорова юлташсем кулленех икшер норма тăваççĕ. Çавăн пек тĕслĕхсем «Пионер» колхозра та нумай. Планпа пăхнă тăрăх, кунне алăпа 0,10 гектар вырмалла пулсан, чылаймĕ 0,20—0,25 гектар выраççĕ. Акă, М. Журавлева, И. Долгова, А. Макаров колхозниксем пĕр кунхи нормăна 150—200 процент тултараççĕ. Çав вăхăтрах вĕсен ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. Каннă хушăра колхозниксене Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерĕнисене вуласа параççĕ. Çĕршыв обороний фондне 500 тенкĕ укçан тата облигацисем пухса панă.

П. САКМАРОВ.

Ылттăн сехетсем параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Древкомбинатри инженерно-технически работниксем, çак кунсенче пулса иртнĕ пухура, оборона фондне пĕр кунхи ĕçукçине парса тăма йышăнчĕç. Кунсăр пуçне чылай работниксем оборона фондне тĕрлĕрен хаклă йышши япаласем пама пулчĕç.

— Эпĕ оборона фондне тунине чĕререн ырлатăп. Тăван Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса пыма хатĕр, — терĕ пухура инженер Шехтер.

Шехтер юлташ оборона фондне ылттăн сехет тата 1000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Малышев юлташ ылттăн сехет, Кац юлташ ылттăн футляр оборона фондне хыврĕç.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Укерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ летчик-истребитель кĕçĕн лейтенант В. В. Талалихин. Августăн 6-мĕшпе 7-мĕш хушшинче çĕрле Мускав çине вĕçсе пыма хăтланнă фашистла «Хейнкель-111» бомбардировщика геройла атакăланă тата ăна хăйĕн самолечĕпе пырса çаснă.

В. Малышев фотоукерчĕкĕ. (ТАСС).

Çĕрлехи çапăçу

Кĕçĕн лейтенант Виктор Талалихинăн малтанхи кун ĕç ăнăçлă пулман: вăл сывлăшпа пирсе çĕмĕрнĕ тăшман бомбардировщикĕ, çĕрлехи çăра пĕлĕтсем ăшне кĕрсе, çутă вырăнтан тухнă та тарса çухалнă.

Мускав çине килекен бомбардировщиксене тытма тепĕр кунне çĕрле тухса, Виктор Талалихин хăйне панă районра патруль пулса вĕçсе çӳренĕ. Каç çутă, уйăхлă пулнă. Çĕрлехи пĕлĕт çине вăл тинкерсе пăхнă. Тăшмана сыхласси çăмăлах пулман.

Пĕрре вăл уйăх çуттинче хăйĕнчен инçех мар вут çутти çуталса хăвăртах сӳннине курнă. «Самолет!» Талалихин хăйĕн хурчкине тăшман патне илсе пынă.

Самолет патне вăрттăн сывхарсан, унăн хӳри çинчи свастикăна тата фюзеляж çинчи хура хĕресе курнă. Ку «Хейнкель» йышши бомбардировщик пулнă. Талалихин пулясен пĕрремĕш черетне тăшман çине кăларса янă. Тӳрĕ тĕллесе пени тăшмана çителĕклĕ тивнĕ. Бомбардировщикăн сылтăм моторĕ тĕтĕмпе мăкăрланса ялкăшма пуçланă. Унта пулемет сасси илтĕнмен. Тăвата пин метр çӳллĕпе кĕтмен çĕртен тапăннинчен аптăраса ӳкнипе тăшман летчикĕсем шухăшласа илме пултарайман пулас. Фашистсем аялăрах анма пытăннă, хăварăпа хăвăрттăн тарма хăтланнă.

— Çук, юнлă çăхан, всĕ тарса хаяймăн!—тенĕ Талалихин.

Вăл газне вăйлăрах ярса, «Хейнкель» çине хӳри енчен, ăна пăрăнма памасăр, тапăнса пынă. Тăшман патне пырса тухнă та, вăл кабина çине умранах пеме тытăннă.

Талалихинăн пулемечĕ ăнсăртран пеме чарăннă. «Хейнкельтен» юлмасăр, летчик пулеметăн мĕнпур чăсĕсене васкавлăн хыпаласа пăхнă. Пурте йĕркеллĕ, тĕрĕс-тĕкел пулнă. Анчах пулемет ĕçлемен, унăн пульлисем пĕтнĕ. «Каять!» тесе шухăшланă вăл. Енерхи ăнăçсăрлăх асне килнĕ. Летчикăн нервисем хĕрӳленсе çитнĕ. «Çук, вăл тарса хăтăлмалла мар! Таранить тăватăп».

Приборсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, Талалихин тăшман самолечĕ патне çывăхах пынă. Сасартăк унăн сылтăм аллине тем вĕрискер лекнĕ. Пуля алă лаппине пĕçертнĕ.

Талалихин пĕтĕм вăйне пухнă, аллисем штурвала хытăрах чăмăртанă. Вăл, газне хăвăрт ярса малалла туртăннă, çӳлтен пырса «Хейнкель» хӳрине хыттăн пырса çапнă. Бомбардировщик хускалса илнĕ, тайăлса кайнă, вăйне сухатса ӳкме тытăннă. Хытă янăранă взрыв илтĕннĕ. Бензин бакĕсем çурăлнă. Татăкăн ванса, çăхан сĕре ӳкнĕ.

Вăйлăн çапăннипе, Талалихин самолечĕ те ӳкме тытăннă. Летчик пиçиххине вĕçсе парашютпа сикнĕ. Вăл колхоз пахчине аннă.

Кайран палла пулнă тăрăх, Талалихин пысăк «кайăка» персе ӳкернĕ. Вилнĕ экипажра нимĕçсен подполковникĕ пулнă. Унăн кăкăрĕ çинче тĕксĕмленсе тимĕр хĕрес ялтăранă, çанни çинче Норвегири Нарвик хулине çĕмĕрнĕмĕн панă фашистла эмблема пулнă.

Столчăна тăшманран сыхласа, Талалихин пысăк хастарлăх кăтартнă.

Микоян ячĕпе тăракан аш-какай комбинатĕнче нумай пулмасть рабочи пулса ĕçленĕ çирĕмвиç çулхи комсомолец Талалихин хăйсен часĕнче халĕ чи лайăх истребитель пулса тăрать. Белофинсене хирĕç çапăçнăмăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă.

Правительство хăюллă летчикăн ĕçне пысăк хак парса хакларĕ. Ана Совет Союз Геройĕн званине панă.

Я. МАКАРЕНКО.

Тавçăруллăх

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. В. местечко таврашĕнчи огневой позицинче тăракан батарея командирĕ патне боецсем сакăр çулхи ачана илсе пынă. Вăл йывăрран сывланă, унăн тумтирĕнчен шыв юхнă.

— Командир пичче! — тенĕ вăл, — нимĕçсем пирĕн яла йышăнчĕç. Хĕрсене тата тарса ĕлкĕреймеллисене асаплантараççĕ. Пирĕн çуртра эпĕ пĕччен тăрса юлтăм. Унта вĕсен офицерĕсем пухăнчĕç, ĕнер каçхине ĕçрĕç-ĕçрĕç те, халĕ ӳсĕрскерсем вилнĕ çынсем пек выртаççĕ. Акă халĕ вĕсене тупăран пĕрсчĕ, вара пĕрне те чĕрĕ хăвармăттăн. Сăрт çине каяр, пирĕн çурт ăçта тăнине эпĕ тĕм айĕнчен кăтартăп.

Аслă шухăшлакан ача сăмахĕсене командир тĕплĕн итленĕ, унăн хыççăн кайнă. Разведчик пытанса çырма урлă инçе каçнă, кăтартнă çурт патне çитсе, ача чăнах та тĕрĕс каланине пĕлнĕ.

Çур сехет те иртмен, икĕ хутчен пенĕ, çуртри ӳсĕр офицерсене çĕмĕрсе тăкнă. Пĕри те тухса тарма ĕлкĕреймен.

— Ку питех те лайăх пулчĕ,—савăннă ача. — Вăрçă хыççăн пире çĕнĕ çурт лартса парĕç.

ГОЛЬЦЕВ (ТАСС спецкорĕ).

УЛПУТ ТАВРĂННИ

Н. ялне, фашистсен отрячĕпе пĕрле, нимĕç офицерĕн тумне тăхăннă, чăн-чăн шулер пек, патралла сăн-сăпатлă пĕр çамрăках мар çын пырса кĕчĕ. Вăл ял варрине хăваласа пухнă пĕр сасăсăр тăракан халăх çине пăхса илчĕ те, таса тухман вырăс чĕлхипе каласа тытăнчĕ:

— Сывă-и, мужиксем.

Анчах та, халăх хушшинче мужиксене тупма çăмăлах мар. Пухăннă халăх хушшинче ачалла хĕрарăмсемпе ватă стариксем ытларах пулни ахаль куçпах пăхсан та лайăх курăнать.

— Эпĕ сирĕн улпуту, — терĕ офицер. — Çак çĕре манăн атте — Павел Игнатьевич Жихарев тытса тăнă. Вăл халĕ, тĕпмул правви тăрăх, мана тивĕçет. Эпĕ Германи çарĕпе пĕрле йĕрке тума килтĕм. Йĕркесĕрлĕх пĕтрĕ. Паянтан пуçласа эсир мана тата Германи çарне пăхăнса тăратăр.

Пухăннă халăхăн пит-куçĕ çинче хăй таврăннăшăн савăннине кăтартакан палăрсене темĕн пек пăхсан та курман пирки, «улпут» хăйĕн çыру кĕнеки çине пăхса илчĕ те:

— Ну, Ефим Клевцов ăçта? Сывă-и? — тесе ыйтрĕ.

Халăх хушшинче нумайăшĕ сĕрлеме тытăнчĕç. Мала кукша пуçлă, шуралса кайнă старик тухса тăчĕ.

— Эпĕ Клевцов Ефим.

— Эсĕ мана астăватăн-и, Ефим? — терĕ офицер хăйĕн пит-куçне куланçа тутарса. — Павел Игнатьевичăн ывăлне. Володяна астăватăн-и?.. Аттем вилчĕ вĕт...

— Тăпри çăмăл пултăр, — терĕ ăна хирĕç старик çĕрелле пăхса.

— Тĕрĕсрех каласан, мана эсĕ пăхса ӳстертĕн вĕт, пирĕн патăрта кухняра ĕçленĕ чухне мана алăра йăтса çӳретертĕн...

— Ку тĕрĕс, алăра та йăтса çӳренĕ, — терĕ старик сиввĕн.

— Астăватăп, эсĕ мана мăю çине те лартса йăтса çӳреттĕн, — аса илсе, ассăн сывласа ячĕ господин помещик.

— Тĕрĕс... Ку та пулнă... Мăй çине те утланса çӳренĕ... — тесе килĕшрĕ Клевцов.

Халăх хушшинче шăппăн кулни илтĕнсе кайрĕ.

— Ухмах кулă ыр тумасть, — тесе тулхăрчĕ офицер. — Германи çарĕ шӳт тунине юратмасть. Ефим, мана пӳртелле ăсатса кĕрт-ха.

Елĕкхи помещикăн çуртĕнче агрошкул пулнă.

— Нимĕн йĕркеле те çук, — тесе мăкăртатать помещик. — Йăлтах улăштарса пĕтернĕ... Пĕлме те çук...

— Ку тĕрĕс. Пĕлме çук,—тесе килĕшет Ефим нимĕн пулман пекех лăпкăн.

— Акă мĕн, Ефим, — терĕ помещик. — Эпĕ сана хам çынна каланă пек калатăп. Мужиксемпе калаçса пăх. Пирĕн, урăхла каласан, Германи çарне вырăссен ĕлĕкхи йăли тăрăх çăкăр-тăварпа чыслăн кĕтсе илмелле. Генерал килет...

— Тĕрĕс ку, — тесе тавăрчĕ старик. — Мĕншĕн кĕтсе илес мар-ха? Кĕтсе илетпĕр. Питĕ чыслăн кĕтсе илетпĕр.

Чыслăн кĕтсе илесси çĕрле пулса иртнĕ. Партизансен отрячĕ, Д. агроном командованийĕпе, çурт патне пынă та ăна, унта сывăракан нимĕç офицерĕсемпе пĕрлех, вут тивертсе çунтарса янă. Партизансем хушшинче Ефим Клевцов та пулнă. Отрядри боецсем пире кайран çапла каласа пачĕç: вăл боецсене хăйĕн уллучĕ сывăракан пӳлĕме ертсе кĕнĕ те, помещика хушшинчен лăкаса вăратса, хăйĕн яланхи пекех лăпкă сассипе çапла каланă:

— Вăратнăшăн касару ыйтатăп, Владимир Павлович... Эпĕ сана всĕ пĕчĕкĕ чухне вĕлерме маннăччĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл йăнăша тӳрлетес пулать...

Тепĕр темиçе сехетрен ял пырса кĕнĕ красноармеецсем часĕ аялти кĕпейĕм вĕçĕнех вилнĕ немĕç офицерĕн виллине тупнă. Унăн кĕсьинчен Владимир Жихарев обер-лейтенанта, пехотнăй полк штабĕн тăлмачине панă документа кăларнă.

Антив, колхоз çĕрне хапсăнаканнисем çакăн пек чыслăн кĕтсе илнине лайăх асра тытчăр.

(«Известия» № 193).

АЧАСЕМ

Кам çинчен çырас? Кашни çĕнĕ кун историне героизм çинчен калакан страницăсем çырса кĕртет. Ытти-сенчен нимĕнпе те ытлашши уйăрăлса тăман çынсеннех хулĕсем çинче çилтăвăлпа çулăмран çунатсем ӳссе çитĕнеççĕ. Эпир лайăх пĕлсе тăнă, эпир ун умĕнчен асăрхамасăр та иртсе кайнă çыннăн питĕнче сасартăк геройăн пархатарлă та хаяр сăнарĕ тухса тăрать. Çамрăк йĕкĕт ӳссе çитĕнсе улăп пулать, ватă хресчен хĕрарăмĕ юмахри пек хăватлă çын пулса тăрать. Пирĕн çĕршывра халĕ чăн-чăн этемĕн пархатарлă сăнне, чĕресен аслă илемлĕхне кăтартса паман кĕтес çук. Çав паха сăнлăхсем—чăн-чăн этемĕн пархатарлă сăнĕ, чĕресен аслă илемлĕхĕ—хаçатсенчи сводкăсемпе радиопередачăсем пĕлтерекен геройла аслă ĕçсемпе ялтăртатса çуталса тăраççĕ. Çав геройла ĕçсем, тултан пăхсан, вут-кăвар пек те юн шек çунмаççĕ, пĕлĕтелле кăвакăл-симĕсĕн çунса вăркăнакан ракетăсем пек те куранмаççĕ, анчах вĕсенче çавтери пысăк хăюллăх, паттăрлăх, çавтери тарăн юрату пĕтĕçсе тăрать; хăвăн пурнăçу та çав аслă юрагу умĕнче чăн та ĕнтĕ иртсе пынă чухне алăпа шăлса пăрахакан тусан тĕрчинчен те пĕчĕкрех пек курăнать.

Героизм историйĕнче пирĕн ачасем уйрăм страница çыраççĕ.

Çакă вуникĕ çулхи арçын ача мĕнле çушаматлă, мĕн ятлă пулни кирлех те мар. Ун пек ачасем халĕ ĕнтĕ нумай. Эпĕ ятарласах ун çинчен çыратăп, тĕпшĕн тесен, мана унăн кĕске те тĕлĕнсе каймалла историйĕ çинчен хăй куçĕпе курнă пĕр çын каласа пачĕ.

Акă çулпала нимĕçсен танкĕсем кĕрлесе килеççĕ те ĕнтĕ. Кĕçех укăлча патĕнче хурçă каскăсем курăнса каяççĕ. Кунта çирĕм çул ытларах ĕлĕк нимĕçсене хирĕç кĕрешнине лайăх астăвакан Украинăн авалхи ялĕ ларать. Сывăхра вăрман—ешĕл-симĕс чăтлăха шала кĕрсе пытанма, тăшман чаçĕсем çине аякран пырса тапăнма пулать.

Мĕнпур арçынсем вăрмана тухса каяççĕ. Лашасем çине утлан та—яра пар! Çул çинче тусан йăсăрланать. Юланутсем хыççăн тусан пăтăрмахĕнче вуникĕ çулхи арçын ача чупать. Партизансем каяççĕ, ачан яла тăрса юлмалла.

Ачан аллисем, йĕнер пускăчинчен, лаша çилхисенчен çатăрласа тытма пăхаççĕ. Анчах ăна, вуникĕ çулхискерне, вăрмана мĕнле илсе каймаллаха, ырлăха-и—ширлăха-и, вилĕме-и—чĕрĕлме-и, пĕгме-и—кĕрешме-и, — кĕрешӳре арçын вăйĕ тата арçын çирĕплĕхĕ кирлĕ-çке-ха?

Çапах та шел çав пĕчĕк йĕкĕте, куççуль юхтарса, йĕнер пускăчисенчен чăрсăрăн тытса, лаша хыççăн чупаканскерне. Ачан чĕри тĕпне çитиччене хыратса сурананнă: ăна партизансен ретне тăма тивĕçлĕ тесе шутламарĕç, ăна алла хĕçпăшал тытма тивĕçлĕ тесе шутламарĕç. Анчах вăл туять, пысăкскисем тунинех тума пултарассине пĕтĕм чун-чĕрипе туять. Ыттисем пекех, вăл та пултармалла. Вăл чăн та ыттисем пекех пуласшăн. Лашасем хытăран хытăрах чупаççĕ. Çара урасем тусанлă çул тăрăх ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Унăн сассинче—пăшăрханни, кӳренни, тарăхни.

Акă такăшĕ, ачана хĕрхенсе, йĕнер çинчен тайăлать те ăна пысăк мар япала парать.

— Ме-ха, тыт граната. Лар ялта, мĕн те пулни пулсан—систерĕн. Ăçта мĕскер—асăрха. Кирлĕ пулсан—гранатăпа шаплаттар.

Куççулĕ самантрах типет. Ача аллисем сивĕ хурçă гранатăна çавăрса тытаççĕ. Çапла, халĕ ĕнтĕ пурте йĕркеллĕ. Партизансенни пекех, унăн та граната пур. Пысăк çынна хушнă пекех, ăна та ĕç хушнă.

Ача гранатăна хĕвне чиксе пытарать. Вуникĕ çултискер вăл яла тавăрăнать. Хушнă пекех — çăнакалать, асăрхакалать. Ача çине никам та тим курса çавăрăнса шăхмасть. Немĕçсем яла пăхса çавăрăнайман-ха, вĕсем ял вĕçĕнче асăрхануллăн тытăнса тăраççĕ.

Ача çăнакаласа пырать. Çул хĕрринчи пӳртре—штаб. Немĕç офицерĕсем чупкалаççĕ. Аслăсем патĕнче часовойсем. Ача хĕвĕнче ӳт çумне металл сĕртĕнсе пырать. Пĕчĕк алă сыхланăллăн тĕрĕслет. Çук, граната ниçта та кайман, куntах вăл, хĕврех. Ял вĕçĕнчи пӳртре—немĕçсен штабĕ, немĕç офицерĕсем.

Вĕсем яла çаратма пуçличчен, вĕсем çуртсене çунтарма, ачасемпе хĕрарăмсене вĕлерме пуçличчен, пĕчĕк йĕкĕт лайăх пĕлекен çав пӳрте кĕмелле. Часовой ăна усал сассипе кăшкăрса чарсан, унăн сасси чĕтремест, куçĕсем сапаланмаççĕ. Вăл аллисемпе хăлаçланкаласа, унăн штаба пĕлтермелли пур, тесе кăтартать. Унăн çавăнта кĕмеллех.

Алăкран офицер пуçне кăларса пăхать. Украина чĕлхине кăнттамлатса пăсса, мĕн ĕç пурри çинчен ыйтать. Ача сасси чĕтремест. Вăл офицера тӳрех куçран пăхать. Çапла та капла, вăл партизансем ăçта пытанни çинчен пĕлтересшĕн.

Ана пӳрте илсе кĕреççĕ. Унта сĕтел хушшинче лешсем ултăн лараççĕ. Карттă çине ӳпĕнĕ те хăйсен чĕлхипе темĕн чакăртатаççĕ. Куçĕсем вĕсен карттă çинчен халь кĕнĕ ача çине çĕкленеççĕ.

Çапла та капла. Ача пӳртре мĕн пурине хисепе илет, сăнать. Ултăн. Эполетсем, палласа илмелли знаксем. Немĕн иккĕленмелли те çук—пысăк офицерсем.

Хĕвре граната ӳт çумне сиввĕн лексе выртать. Ача куçĕсем сиввĕн пăхаççĕ. Ача куçĕсем шутласçĕ, лешсем патне мĕнле те ăçтан çывхарса пымаллине, ĕç ăнăçлă пултăр тесен мĕн тумаллине тавăрма тытăнаççĕ. Вăл лăпкăн та йĕркеллĕн шухăшласа ответлет. Çапла та капла ĕнтĕ. Ялтан пĕр çын юлмиччен партизана тухса кайрĕç.

Чурăс сасăсем ачаран тӳсеймесĕр ыйтаççĕ. Ача ерипен те лăпкăн ответлет. Ĕçе лайăхрах майлаштарма вăхăт пултăр тесе, çав сĕтел хушшинчисене, вĕсем ăнсăртран мĕн те пулин шухăшласран лăплантарас тесе, ача чылай пысăк истори каласа парать. Хресченле, васкамасăр, тĕплĕн.

Юлашкинчен, чи пысăк пуçлăхĕ, варринче лараканскер, аллине сулать. Çитет. Пуçлăх ĕнтĕ çынсем ялтан тухса кайнине тата мĕнле тухса кайнине пурне те пĕлет. Халĕ пĕр япала пĕлмелли кăна юлнă: ăçта вĕсем?

Немĕçлерен куçараканни ачана пуçлăх ыйтăвне куçарса парать:

— Партизансем ăçта?

Ача малалла пĕр утăм ярса пусать. Акă вăл ĕнтĕ сĕтел умĕнчех. Ултăшĕпе те куçа-куçăн тăрать. Ачанни пек мар тӳлек сасăпа ултă офицера тӳрех куçран пăхса çапла калать:

— Партизансем пур çĕрте те.

Вара хĕвĕнчен гранатăна çиçĕм пек хăвăрт туртса кăларать те, çиçĕм пек хăвăрт леш сĕтел хушшинче лараканнисем çине вăркăнтарать. Вĕсем сиксе тăма ĕлкĕриччен, кăшкăрма, мĕн пулса иртнине тавçăрса илме ĕлкĕриччен вилĕм çитет.

Вĕсемпе пĕрлех вуникĕ çулхи ача та пĕтет. Пĕр çын ултă çыннăн. Унăн ачалла сăн-сăпачĕ пысăк çыннăн хаяр та çирĕп сăн-сăпачĕ пулса çирĕпленет. Вилнĕ ачан çамки çинче геройăн аслă сăнарĕ.

Ана немĕнле вил тăпри те пытараймасть, тăван çĕр те ăна хуплаймасть. Çунтарса янă пӳртре пĕчĕк ача ӳчĕ ыттăн çулăм пулать. Çулăмлă ача чĕри Украина ялĕ çинче ыттăн çулăм пулса çĕкленет.

Çавăнпа та унăн хушамачĕ мĕнле пулни, вăл уйăрах тăрăх чупса çӳренĕ чухне амăшĕ ăна мĕнле ятпа чĕнни кирлех те мар. Вăл çĕршер çынтан пĕри,—çак ача чĕри хавхаланăвĕ, пысăк çын пекех ăнланакан, хĕрӳллĕн юратма шĕлекен ачан хăюллăхĕ. Вилессе те вăл пысăк çын пекех шархатарлăн вилме шĕлнĕ.

* * *

Йăлтăртатакан тĕссемпе тата мĕлкесемпе тулнă уйăхлă каçхине, Украинăри ырă шăршаллă, пылак каçхине çул тăрăх машина пырать. Инçетре вăрман хыçĕнче кăшт çеç курăнакан пĕлĕтсене юн тĕсĕпе чĕртсе, шурăмпуç хĕрелет. Авăрта выртакан çĕмĕрлнĕ грузовик, пĕлĕтри çав хĕрлĕ шурăмпуç, аякри кĕмсĕртетнĕ сасăсем çак ырă шăршлă пылак каç — вăл яланхи пек маррине асăрхаттараççĕ. Уйăх пулсан та, чечексен ырă шăршипе пулсан та, çутçанталăк питĕ шăп пулсан та çак каç вăл хăрушă та юнлă каç.

Çул тăрăх пысăк хура машина шăвать. Уйхирте сывлăм йăлтăртатать. Кĕмĕл шек йăлтăртатса тăракан çул вăрманăн хура талккишне кĕрсе каять.

Кунта вара вăрман хĕрринче сасартăках кăшкăрнă сасă. Лакăмран иккĕн тухаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те вунпилĕк çултан ытла мар. Ялти арçын ачасем. Аллисенче пăшалсем—киввĕ берданкăсем.

Машина чарăнать. Асăрханса, пăшалĕсемпе тĕллесе вĕсем автомобиль патне пыраççĕ. Вĕсен аллинчи берданкăсем чĕтрени уйăх çуттинче лайăх курăнать. Сыхланнăн утасласа, мĕн пулас-килессине пурне те кĕтсе илме хатĕр тăрса, вĕсем сывхараççĕ.

Шухăшлăр-ха—тĕкĕм çĕр, йĕри-тавра пушарсем, инçетре пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлесе тăракан сасă. Хура вăрман, пушă çул, çак пушă çул çинче пысăк та хура машина. Шалта кам ларни курăнмасть. Кам пĕлет, тен унта пуçран пуçласа ура тушанне çитиччен хĕçпăшалланнă çынсем лараççĕ, тен унта пулеметсем, кам пĕлет, тем шуйтанĕ пулма пултарать. Вĕсем малалла васкавлăн талпăнакан диверсантсем, шпионсем, нимĕç офицерĕсем пулма пултараççĕ.

Çак палламан машинăна хирĕç вăрмантан иккĕн тухаççĕ, çулĕсем вĕсен вунпиллĕкшер çултан ытла мар.

— Стой!

Эпир чарăнатпăр. Машина алăкне васкавлăн уçатпăр. Алăри револьверсене васкавлăн пытаратпăр.

— Пропусксем пур-и?

Ачан хаяр сасси. Паллах, эпир пропусксене кăтартатпăр. Пĕчĕкçĕ йĕкĕт куçхаршисене пусăрăнтарса уйăх çутинче тимлĕн вулать. Пропусксене калла парать. Унăн сăн-питĕнче вăл халĕ ĕнтĕ хăйне çăмăллăн туйни сисĕнет. Вĕсем пирĕнпе лăпкăн калаçаççĕ. Вĕсен аллисем те чĕтремеççĕ. Хурал, çапла, ку вăл хурал. Кунтан инçех мар вăрман хыçĕнче вĕсен ялĕ. Вĕсем çул çинче хурал тăраççĕ. Тем пулас-килес.

Эпир, аллисене берданкăсем тытса хăйсен ялĕ патĕнчи çула сыхлакан çак вунпиллĕк çулхи икĕ ачана хăварса, малалла каятпăр. Икĕ ача, вĕсем çак çул çине кирек-кам килсе çитсен те лакăмран сике-сике тухаççĕ. Икĕ ача, вĕсем йывăçсем чăштăртатса сывланă сасăпа хумханса тăракан çак уйăхлă хăрушă каçхине пĕлĕтре хĕрелекен шурăмпуç çине пăхаççĕ, инçетре кĕрленĕ сасăсене итлеççĕ, çулăн çак пĕр сыпăкĕшĕн пĕтĕм ответлăха хăйсен хулпуççийĕсем çинче тытса тăраççĕ. Нервăсем вĕçне çитиех туртăнса çивĕчленнĕ. Вăй-хал çавтери хыттăн чăмăртанса çирĕпленнĕ. Шикленесси, шуйханасси мĕн икенне ăнланман чухне герой пулма çăмăл. Анчах çав икĕ ача хăйсен ачалла хăравçăлăхĕсене — тĕттĕм çĕртен, вăрçăран, малалла мĕн пулассинчен хăранине геройла пусарса пынă. Çав икĕ ача, аллисем чĕтренисене пăхмасăр, хăйсем пĕлмен япалана хирĕç, вĕсемшĕн вилĕм хăрушлăхĕ пулма пултаракан япалана хирĕç тухнă; вĕсем лакăмран сиксе тухнă самантра вĕсен шухăшĕпе хăйсен умĕнчи япала чăн та хăрушлăх пулнă ĕнтĕ.

Икĕ вунпиллĕк çулти ача. Мĕн хурал тăнă вĕсем ĕнер, мĕн хурал тăраççĕ паян—вăрмансенче, çулсем çинче, ялсемпе поселоксенчи укăлча хапхийĕсем патĕнче? Мĕн вĕсем, фронта кайнă арçынсене улăштарнăскерсем, хăйсем «стой» тесе кăшкăрнине хирĕç чĕрисем тĕлне пулясем туянаççĕ? Кам каласа тухĕ вĕсен мĕнпур ячĕсене, вĕсем пурăннă ялсемпе местечкăсен ячĕсене кам çырса тухĕ? Çав ялсенче вĕсем пурăннă, анчах çав ялсенче вĕсем ĕнтĕ пысăк çын çулĕсене нихăçан та çитеймĕç.

Вĕсен ячĕсем—легион. Пирĕн ачасем—пысăк çынсенни пек хăюллăхпа, пысăк çынсенни пек ăстăпа тăван çĕршывăшăн кĕрешекен геройла, партизанла та чаплă совет ачисем. Пирĕн ачасен юнĕсенче ирĕклĕхе юратни çулăмланса тăрать, вĕсемшĕн тăван çĕршыв ячĕ—вилĕ сăмах мар, вăл хăй чĕрĕ пурнăç, хăй чĕре таппи, пурăнма çулăмлăн чĕнни, тарăн та тулли юрату.

Вĕсен кĕрешĕвĕ—пирĕн тĕрĕслĕхпе чăнлăха çирĕплетсе пăракан чи ĕнентерӳллĕ ĕç. Çав вăхăтрах вĕсен кĕрешĕвĕ—ирсĕр тăшмана чи хăрушла айăппа айăплани пулса тăрать. Пирĕн кунсенчи событисене тĕпчесе вĕреннĕ чухне истори ирсĕр тăшмана çавăн пек чи хăрушла айăппа айăплĕ.

Совет ачине хĕвеллĕ те телейлĕ ачалăх панă тăван çĕршыв умĕнчи парăма пирĕн ачасем хăйсен юнĕпе тӳлеççĕ. Эпир çĕнтерес ĕçĕн вăçи çине пирĕн ачасем хăйсен юнĕсене тăкаççĕ,—хăюллăх, юратупа чăнлăх çав вăçене пирĕн еннелле тайтарĕç.

ВАНДА ВАСИЛЕВСКАЯ.

(«Правда»).

Оборона фондне мотоцикл панă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красное Сормово» колхоз çĕршыв обороний фондне 5 пин тенкĕ тăракан çĕнĕ мотоцикл панă. Çав мотоциклпа колхоза Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ премиленĕ пулнă.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕмĕрсе тăкнă тягачпа йывăр оруди, вĕсене С. патĕнче пулса иртнĕ çапăçура немĕçсем каялла чакнă чух пăрахса хăварнă.

(ТАСС фотохроники).

Цехри агитаторсем

Пĕрремĕш номерлĕ цехри рабочисем кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, яланхи пекех хăйсен столовăйне пухăнчĕç. Залри халăх самантрах шăпланать. Кашниех сĕтел хушшине кĕрсе ларса апатланма тытăнать.

Столовăйне цехри диспетчер П. Никитин юлташ кĕрет. Унăн аллинче халь кăна килнĕ çĕнĕ хаçат-журналсем. Ана рабочисем пурте пĕлеççĕ. Иртнĕ çулсенче вăл цехра профсоюз организаторĕ пулса ĕçленĕ.

Халĕ Никитин юлташ рабочисем хушшинче урăх ĕç тунине палла пулса тăрать. Вăл — агитатор тата «Пильщик» стена хаçачĕн редакторĕ.

Агитатор «Правда» хаçата сĕтел çине хучĕ те Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернĕ хыпарсене вулама пуçларĕ. Аякра ларакансем агитатор сывăхнерех куçса ларчĕç. Залри халăх татах та шăпланчĕ.

— Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе сыхăнса, противникăн çапăçу хирĕнчи мотомехчăсĕсемпе пехотине тата унăн аэродромĕсенчи авиацине пыра-пыра çапнă.

— Çапла кирлĕ вĕсене! Сынвĕлеренсем хăйсен вилĕмĕсене тупаççĕ,—илтĕнет сасă.

Никитин юлташ малалла фашистсен Львов хулинчи тискерлĕхĕсем çинчен вулать.

Сăмахсем кашнин чĕрине пыра-пыра тивеççĕ. Хăшпĕрисем кунта чăтса тăраймарĕç. Ватă рабочи ура çине тăчĕ:

— Бандитсем нихăçан курман-илтмен ирсĕрлĕхсем тăваççĕ. Вилĕм вĕсене! Вăхăт çитĕ, шалчисем тулĕç пĕтсĕрсен,—терĕ вăл тарăхса.

Агитатор хаçат çинчи хыпарсене вуласа пĕтерчĕ. Унтан умра тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

— Эпир производствăра стахановла ĕçленипе Хĕрлĕ Çара пулăшма пултаратпăр. Пирĕн кашни кун ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тумалла. Енер пирĕн цех плана ытлашшипех тултарнă. Хăшпĕр бригадăсем татах та лайăхрах ĕçлерĕç, икшер норма турĕç. Анчах вăл çителĕксĕр-ха, паян эпир татах та лайăхрах ĕçлеме тивĕçлĕ.

Завод гудокĕ янраса каять. Столовăйра ларакансем цеха тухаççĕ. Кашниех смена пĕтиччен татах та пысăкрах çитĕнӳ тăвас шухăшпа хастаррăн ĕçе тытăнать.

Халхи вăхăтра Çĕмĕрлери древкомбинат цехĕсенче массăллă-ăнлантарулă ĕçе вунпăр агитаторсем туса цыраççĕ. Вĕсем рабочисене кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче, ĕç хыççăн е ĕç пуçланас умĕн Совет Союзĕнче, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчере пулса иртекен ĕçсем çинчен каласа парасçĕ. Вĕсене кашни рабочи, работница пысăк тимлĕхпе итлет.

Пĕрремĕш номерлĕ цехра агитаци ĕçне, П. Никитин юлташăр пуçне, техприемщик коммунист К. Хайтов, смена мастерĕ Орешников, цех начальникĕ Н. Прокопьев юлташсем те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем ку ĕçе яланах выгăнти фактсемпе çыхăнтараççĕ. Çавна пула калаçусем интереслĕ иртеççĕ.

Калаçу темисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Çак кунсенче акă агитаторсенчен пĕри «Сывлăшран химиллĕ майпа килсе тапăнсан вырăнти халăхăн хăйне мĕнле тытасси» тема тăрăх калаçу ирттерчĕ. Ку калаçу рабочисене кăмăла кайрĕ, чылайăшĕсем ыйтусем пачĕç.

Цехра «Пильщик» стена хаçачĕ тухса тăрать. Унта рабочисем активлăн хутшăнаççĕ. Стена хаçачĕ цехри стахановецсен ĕçне, социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пынине, малта пыракансен ĕç опычĕсене номертен номерех çутатса пырать. Мĕнпур рабочисене стахановла ĕçлеме, сыхăлăха вăйлатма, çар ĕçне вĕренме чĕнет.

— Ситес кунсенче пирĕн 9-мĕш номер тухать. Вăл номерте эпир август уйăхĕнчи ĕçĕн малтанхи результатсене çутатса паратпăр,—тет стена хаçачĕн редакторĕ Никитин юлташ.

Кунсăр пуçне тата цехра кăтарту хăми организациленĕ. Унта рабочисем, бригадăсем тата сменăсем плана кашни кун мĕнле тултарса пыни çинчен çыраççĕ.

Рабочисем хушшинчи массăллă-ăнлантарулла ĕç производствăри ĕç тухăçлăхне ӳстерме, дисциплинăна çирĕплетме пулăшать. Цехра халь станоксем çинче ĕçлекенсенчен нормăна тултарса пырайманнисем çук. Кашни бригада, смена хăйне панă заданисĕне иртерсе тултарать. Алексеев, Чимров, Васильева, Данилова, Ширяев т. ыт. юлташсен бригадисем кашни кунах плана 150—250-шар процент тултарса пыраççĕ. Цех коллективĕ июль уйăхĕнчи плана 114,7 процент тултарса комбинатра пĕрремĕш вырăн йышăннă.

— Çĕршыв пирĕнтен мĕн чухлĕ продукци ыйтать, эпир çавăн чухлĕ туса кăларма хатĕр,—теççĕ рабочисем.

Х. ЛИСИН.

Çĕмĕрле. («Чăваш Коммуни» корр.).



Аскăнчăк, ĕмĕтсĕрленсе ĕçсе ӳсĕрĕлни, çаратни, мародерство — гитлерла çарăн тĕп «пахалăхĕсем» çаксем пулаççĕ ĕнтĕ. Фашистла йытăсем ирĕклĕхе юратакан халăхсен хăйсем çаратса нимсĕр тăратса хăварнă çĕрĕ çинче «асăнмаллăх пултăр» тесе сăн ӳкерттерме юратаççĕ, çав ӳкерчĕксем çинче хăйсен тискер сăн-сăпатне намăса пĕлмесĕр кăтартса параççĕ. Ӳкерчĕксем çинче: вилнĕ фашистсем çумĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем тупнă фотоӳкерчĕксен репродукцийĕ. Сирĕн çине ĕçсе супнă фашистсен, вăрă-хурăхсен тата бандитсен тăмсай та ирсĕр сăн-сăпачĕсем пăхаççĕ.

Вĕсем текех çаратаймаççĕ тата вĕлереймеççĕ ĕнтĕ... Вĕсем малалла сăн ӳкерттереймеççĕ ĕнтĕ.

(ТАСС фотохроникин репродукцийĕ).

Донор пулма çырăнаççĕ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи кашни ĕççыннисем тăван çĕршыва усăллă пулма тăрăшать. Кашни ĕççыннăн Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне чĕререн юратса, вăрçăра аманнă красноармеецсене хăвăртрах сывалма пур условисене те туса пама тăрăшать. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем аманнă боец-патриотсем валли хăйсен юнне параççĕ. Шупашкар хулинчи ĕççыннисем кашни кун больницăна хирургически отделенине пырса донор пулма ыйтаççĕ. Нумай предприятисем те учрежденисенче ĕçлекенсем больницăна коллективпа пырса хăйсене донора çырма ыйтаççĕ. Иккĕмĕш номерлĕ ача ясличне ĕçлекенсем, спиртзаводри хĕрарăмсем тата ытти предприятипе учрежденисенчи коллективсем те донора çырăнма организациленсе больницăна пычĕç. Пединститутри студентсемпе преподавательсенчен нумайшĕ донора çырăннă. Килхуçи хĕрарăмсем пирĕн çамрăк хĕрачасем больницăна пырса, хăйсен юнне тама хаваслăн сĕнеççĕ. Донор пулма пыракансем пурте хăйсен юнне хăвăртрах парасшăн. Донорсен шучĕ кулленех ӳссе пырать.

М. ЧУПРАКОВА.

Обязательствăсене срокчен тултараççĕ

ЕТĔРНЕ. Колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Засурск ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз государствăна аш-какай, сĕт-çу, çамарта, çăм, утă парса татнă. Колхоз 1941 çулăн государствăна ыраш тата сĕлĕ памалли обязательствăсене кивĕ тырă парса тултарчĕ. Колхоз председателĕ Величаев юлташ заем, ялхуçалăх налогĕ тата страховка укçисене пĕтĕмпех парса татрĕ.

Çавнашкалах Кăташири «Пионер» колхоз та государство умĕнчи обязательствăсене срокченех тултарнă.

Ялсоветĕн финанс агенчĕ кунсеренех 1500—2000 тенкĕ укçа пухса парать.

«Сура», «Комбайн», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем сĕт-çу, аш-какай, çамарта памалли обязательствăсене тултарнă.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Агитатор уя тухрĕ

Колхозниксем хушшинче калаçу иртерме вăл паян та, яланхи пекех, тĕплĕн хатĕрленнĕ. Юлашки хыпарсен ирхи кăларăмне радио тăрăх итлесе, блокнот çине кĕскен çыра-çыра хунă. Унтан çĕнĕ хаçатсенчи материалсене вуласа тухнă. Вырăнти фактсене илсе кăтартсан калаçу интереслĕрех иртет. Çавăнпа та кăнтăрла çитиччен чылай маларах уя тухса, колхозри агротехникпа тата бригадирсемпе каларĕç. Вĕсем ăна тырă вырнă çĕрте ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пыни çинчен каласа пачĕç. Стахановкăсем юлашки кунсенче тунă ӳсĕмсемпе паллаштарчĕç.

Тырă выракансем кĕске вăхăтлăха канма ларчĕç. Çав вăхăтра вĕсем патне агитатор пырса çитрĕ.

— Каласа парăр-ха, Иван Кузьмич, мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур паянхи хаçатсенче,—ыйтрĕ колхозницăсенчен пĕри.

Агитатор Совет Информаци Бюровĕн сводки çинчен ăнлантарса пачĕ. Хĕрлĕ Çарăн шаттăр кĕрешĕвĕ, уйрăм подразделенисен тата боецсен геройла ĕçĕсем çинчен сырнă уйрăм статьясене пурне те илтĕнмелле, сасăпа вуларĕ. Кунпа пĕрлех Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх каланă сăмах çинчен тепĕр хут аса илтерчĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче, транспортра — кирек мĕнле участокра та ĕç фронтĕнчи геройсен йышĕ ӳссе пырать. Çакна фактсем илсе çирĕплетрĕ вăл.

Кандидатсен группин руководителĕ Антонов юлташ каланă тăрăх, комсомолец-учитель Кузьмин юлташ Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра чылайăх агитаторсенчен пĕри шутланать. Вăл иртерекен калаçусене колхозниксем яланах пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Ялсовет депутачĕ, комсомолка А. Платонова, Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри 1-мĕш бригадăн бригадирĕ В. Родионов тата ытти сем те — пурĕ 12 çын, агитколлектива пĕрлешнĕ. Ĕç дисциплинине татах та ытларах çирĕплетсе, ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене кăтартуллăн вĕçлемелле. Çак ĕмĕтпе туса пыраççĕ большевикла агитацине.

— Колхозниксене ĕнер ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вильăхчĕрĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн хушса тӳлесси çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени çинчен тепĕр хут каласа патăм, — тет колхозри агротехник П. Егоров юлташ.

Политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пыни паха результатсем парать. Колхозниксем тырпулсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕме тăрăшаççĕ. Виççĕмĕш бригада пĕр уйра вырса пĕтернĕ. Кунта ĕçе «отлично» хак парса йышăннă. — Ытти бригадăсенче те начар ĕçлемеççĕ, лайăх ĕçлеççĕ, — тет агротехник.

Кандидатсен группи коммунистсемпе комсомолецсене, учительсене колхозсенчи бригадăсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Агитаторсенчен чылайăшĕ кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ пĕтĕм ĕçе уя, колхозниксем ĕçленĕ çĕре куçарнă.

Т. МАЙОРОВ.

Канаш.

Хĕрлĕ Çара пулăшма

ÇĔРПУ. Комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтарса, Хĕрлĕ Çара пулăшас май туса пыма тытăнчĕç. Комсомолецсем пур ĕçре те пысăк активлăхпа ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтса чылай комсомолецсем заявлени панă. Вĕсем пурте хăйсен заявленисенче ирсĕр фашизма хирĕç кĕрешме хатĕрри çинчен çыраççĕ. Нумай комсомолецсем донорсен ретĕнче тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне, авиацине вăйлатма оборона фондне туни питех те пысăк вырăнта тăнине комсомолецсем ăнланса илнĕ, вĕсем хăйсен пĕр кунхи ĕç укçине, заем облигацисене т. ыт. хакла ямаласене фонда кăваççĕ. Комсомолкăсем: Т. Итакова, П. Богданова пĕр кунхи ĕç укçисĕр пуçне Виççĕмĕш Пятилетка заемĕн облигацийĕсене оборона фондне панă. Колхозсенчи комсомолецсем оборона фондне укçан е тырран хываççĕ.

Комсомол пуçарнипе районра нумай колхозсенче: «Оборона», «Славаш», «Красный пахарь», «Красный Октябрь», «Красный флот», «Шурăмпуç» т. ыт. колхозсенче те ГСО, ПВХО кружокĕсем, уйхирти тырра сыхламалли дружинăсем организациленĕ. Асăннă организацисенче комсомолецсем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пулăшас майпа комсомолецсем тимĕр-тăмăр пухас ĕçе организациленĕ. Районĕпе 35 тонна тимĕр-тăмăр пухнă.

Уйхирти вăйлă тырпула пухса кĕнĕ çĕрте комсомолецсемпе союза тăман çамрăксем стахановла ĕçлеççĕ, ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ.

«Новая жизнь» колхозри комсомолкăсем: Илюшина, Романова, Спиридонова, Картошкин юлташсем кулленхи ĕç нормине 125—130 процент, «Красный флот» колхозри Михайлова, Данилова, Андреева колхозницăсем 170—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Комсомол организаци секретарĕн Даналовăн бригади малти ретре пырать.

Производствăра ĕçлекен комсомолецсем кулленхи ĕç нормине 170—200 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕç. «Перламутр» фабрикăра ĕçлекен комсомолкăсем Ивановăпа Тимофеева 125—130 процент, Профтехшкулти комсомолка Иванова — 150 процент, Терентьева — 150 процент, Кузнецова — 230 процент, Алексеева — 162 процент тултарса ĕçлеççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Кăçал вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче пысăк çĕкленӳ пулассине шанатпăр

ÇĔРПУ. Кăçалхи вĕренӳ çулне районри шкулсем ытти çултисенчен чылай йĕркеллĕрех кĕтсе илеççĕ.

Шкулсене колхозсем пысăк пулăшу парса пыраççĕ. Шкул çурчĕсене юсас, хĕллене валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçсене чылай колхозсем тӳлевсĕр тăваççĕ. Çавăн пек Елаш шкулĕ валли колхозсем 100 кубометр, Иваново шкулĕ валли—30 кубометр, Паваркасси шкулĕ валли—114 кубометр вутă тӳлевсĕр хатĕрлесе, турттарса панă.

Уйрăмах çакна палăртмалла. Шкулсем валли вутă хатĕрлессипе турттарас ĕçе учительсемпе аслăрах классенче вĕренекен ачасем кăçалхи çул хăйсем хутшăнаççĕ. Ку енĕпе Елаш, Старак, Паваркасси шкулĕсенчи учительсемпе вĕренекенсем хастарлăн ĕçлерĕç.

Шкул çурчĕсемпе инвентарьсене нумай шкулсенче юсаса çитернĕ. Пĕтĕмпе илсен, районри шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕрленсе çитнĕ темелле. Уйрăм шкулсенче юлнă вак-тĕвек ĕçсене çак кунсенчех туса ĕлкĕртеççĕ.

Кăçал çĕнĕрен вĕренме илмелли ачасене пĕрремĕш классем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Фронта кайнă учительсем вырăнне çĕнĕ çынсенчен кандидатсем палăртса тухнă. Вĕсене çак кунсенчех пăхса тухса çирĕплетеççĕ. Районра учительсĕр юлнă классем пĕрре те пулмаççĕ.

Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ пособисем çителĕклĕ. Халĕ 7 пин тенкĕлĕх учебниксем кӳрсе килнĕ. Кунсăр пуçне тата ачасем хушшинче учебниксем улăштарса илес ĕçе организациленĕ.

Испытани тытма кĕркуннене хăварнă ачасен пĕлĕвĕсене тĕрĕслес ĕç августăн 20-мĕшĕнче пуçланать. Халĕ ку ĕçе тимлĕн хатĕрленеççĕ. Тĕрĕслӳ витĕр тухмалли ачасем çумне уйрăм учительсене çирĕплетнĕ, вĕсем ачасене пур енĕпе те пулăшса пыраççĕ.

Пур шкулсенчи учительсемпе вĕренекенсем те колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсенче пулăшаççĕ. Уйрăм шкулсенче ачасемпе ятларах звеносем тунă, вăл звеносене учительсем ертсе пыраççĕ. Кунсăр пуçне, шкул ачисем пысăк хастарлăхпа тимĕр-тăмăр шухаççĕ. Уйрăмах ку ĕçре Çĕрпӳ вăтам шкулĕнчи ачасем паха пример кăтартаççĕ.

Районри учительсем пур çĕрте те оборона фондне уйăхсерен пĕрер е иккшер кунлăх ĕçукçийĕсене пама йышăннă. Нумай учительсем оборона фондне заем облигацийĕсене тата ытти хаклă япаласем парааççĕ. Çапла, Çĕрпӳ вăтам шкулĕнчи учительсем коллективĕ оборона фондне хăйсен заем облигацийĕсене 11 пин тенкĕлĕх панă.

Хальхи вăхăтра районри учительсем вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕнхи канашлăва хатĕрленеççĕ. Канашлу августăн 26-мĕшĕнче пулать.

Кăçалхи çул шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче пысăк йĕркелĕх тата çĕкленӳ пулассине шанса тăратпăр. Ку вăл вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕрленнинчен аван курăнать.

СМИРНОВ.

Çĕрпӳ районĕнчи çутĕç пайĕн инспекторĕ.

Чыслă ĕç

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕççыннисене ӳсал тăшмана хирĕç кĕрешме мобилизацилеме чĕнсе каланă кун Валентин Семенович Васильев юлташăн 3 ывăлĕ те фронтра пулнă. Васильев юлташ, аслă çулпуç Сталин юлташ сăмахне ответлесе, кăйăн ирĕкĕпе фронта яма ыйтса хулари Çар Комиссариатне заявлени панă.

— Ăпĕ çамрăках мар ĕнтĕ, 50 çулта, анчах çапах та тăван çĕршывăн аллă пăшал тытса вăрçма пултаратăп,—тет вăл.

Унăн арăмĕ Мария Николаевна Васильева юлташ — килхуçи хĕрарăмĕ. Вăл та пирĕн юратнă Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйне хурсах пулăшма тăрăшать. Вăл медсестрасен курсĕнче вĕренет. Çак кунсенче больницăна хирургически отделенине пырса вăл хăйне донора çырма ыйтрĕ.

М. Ч.

Комсомолецсен пархатарлă ĕçĕ

КАНАШ. «Комбайн» колхозра хăнтăрлахи кану вăхăтĕнче комсомолецсем кулленех колхозниксемпе калаçусем иртереççĕ. Вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем, красноармеецсен фронтри геройла ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Комсомолецсем политикăллă агитаци ĕçне колхозăн кулленхи ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыраççĕ. Агитаторсем тата чтецсем пулăшнипе пур бригадăсенче те стена хаçачĕсем тухаççĕ. Хаçатсем колхозăн кулленхи ĕçĕсем çинчен, Хĕрлĕ Çара пулăшма вăрçă вăхăтĕнче колхозниксен мĕнле ĕçлемелли çинчен çутатса параççĕ.

Большевикла агитаци колхозниксен активлăхне ӳстерчĕ. «Комбайн» колхозра ĕçе хутшăнманни пĕр çын та çук. Уборкăра пионерсемпе шкул ачисем те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Колхоза пулăшма хулари шкул ачисем 40 ана пынă. Колхозницăсем Кузьмина, Константинова, Иванова тата ытти юлташсем те ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

«Красное пламя» колхозри парторганизаци те çĕнĕлле ĕçлеме пуçларĕ. Коммунист Михайлов юлташ кăнтăрла уйра ĕçлет, кăçхине колхоз пурлăхне сыхлать. Коммунистсем пурте агитбригадăра ĕçлеççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. МТ Станцинчи комсомолец Шемякин юлташ лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Çĕртме сухи тунă вăхăтра вăл плана 147 процент тултарса пычĕ, горючи нумай перекетлесе хăварчĕ. Халĕ уборка вăхăтĕнче бригадăна малти вырăна кăларассишĕн тăрăшса ĕçлет. Унăн бригадинчи комсомолецсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Вĕсем государствăна 5 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса панă.

Çавнашкалах Шмидт ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем те лайăх ĕçлеççĕ. Михайловăпа Ванюшин юлташсем кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Германире нефть нумая çитет-и?

1917 çулти декабрьте США президенчĕ Вильсон патне Клемансо çапла çырнă: «Ыранхи çапăçусем валли юнмĕнле кирлĕ, нефть те çавăн пекех кирлĕ... Бензин çителĕклĕ пулманни пирĕн çарсене вăйсăрлатма тата пире союзниксемшĕн усăллă мар мир йышăнтарма пултарать».

Çак сăмахсем ытлашши ӳстерсе каланă сăмахсем мар. Тĕнчери пĕрремĕш империализмлă вăрçă вăхăтĕнче Хĕвелăнăç енчи фронтри çапăçусенче çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшпе нефть чăннипех те тĕп вырăн йышăнса тăнă. Вăрçă—машинăсен вăрçи пулса пынă, вĕсем валли нефть, бензин т. ыт. кашни кун ытларах та ытларах кирлĕ пулнă.

Америка пулăшнине тата Британи владенийĕсенчен нефть килсе тăнине пула, Англипе Франци хăйсен çарĕсене кирлĕ нефтьпе бензина çителĕклех парса тăнă. Çавăнпа та вĕсем тăшмана çĕмĕрсе тăкма пултарнă. «Союзниксем, —тенĕ Керзон кайрантарахпа,—çĕнтерĕвре юханшыв пек килекен нефть çинче турĕç», тенĕ. Германи çарĕ тĕнчери пĕрремĕш империализмлă вăрçăн виççĕмĕш çулĕн пуçламăшĕнчех ĕнтĕ нефть ситменнине асапланнă: вăл хăйĕн тинĕс-çар флочĕпе авиацине кирлĕ нефть продукчĕсене çуррине çеç парса тăма пултарнă.

Çĕнĕ вăрçа хатĕрленсе, Германи фашисчĕсем Вильгельм кайзерăн йăнăшĕсене, Германи валли çар япалисем, уйрăмăнах нефть çителĕклĕ хатĕрлеме пултарайман йăнăшсене тумастпăр тесе нумай кăшкăрчĕç. Нефть тĕлĕшĕнчен Германине «никама та паханса тăман» çĕршыв тăватпăр тесе Геринг пĕрре çеç мар тупа тунă. Анчах çав пушă сăмахсем тĕреклĕ пулман. Чăн-чăн пурнăçа пушă шухăшсенчен уйăрма пĕлекен нимĕç экспертчĕсем пачах урăхла калаççĕ. Вĕсем шутласа кăларнă тăрăх, нефть тĕлĕшĕнчен Германия питех те пысăк йывăрлăх тӳсме пултарать, — вара, çĕнĕ вăрçă — вăраха тăсăлнă вăрçă пулсан, Германия нефть тĕлĕшĕнчен пурпĕрех 1918 çулти пекех арканса ӳкме пултарать.

Штейнберг инженер шутланă тăрăх, «пысăк вăрçă» пулас пулсан, Германие çулталăкне 13 миллион тонна нефть кирлĕ. Çар экспертчĕ Фриденсбург тата ытларах кирлĕ тесе шутлать. Унăн шухăшĕ тăрăх, вăрçă пулсан Германие çулталăкне 15—20 миллион тонна нефть кирлĕ пулать.

Çакна палăртас пулать: ку хисепсене вăрçăччен икĕ çул малтан тунă, ун чухне Германин механизациленĕ çарĕсене йĕркелесе çитермен тата унăн операцийĕсем мĕн пысăкккĕш пулассине пĕлме пултарайман. Çав çар валли нефтьпе бензин мĕн чухлĕ кирлĕ пулнине Голландие, Бельгие тата Франции хирĕç вăрçни кăтартса панă. Унти 45 кун хушшинче 1½ миллион тонна нефть расходланă. Хĕвелтухăç фронтĕ питех те пысăк тата тарăн пулни фашистсене нефть тата бензин тĕлĕшĕнчен ытла та пысăк йывăрлăха кĕртет. Хĕвелтухăçĕнчи фронтри Германи çарне куллен 65—70 пин тонна горючи кирлĕ тесе шутлаççĕ, ку ĕнтĕ уйăхне 2 миллион тонна пулать.

Германия çав йывăрлăха нумайччен тӳссе тăма пултарать-и ĕнтĕ?

Германие нефть сутса тăракан çĕршывсенчен пуринчен те тенĕ пекех тата. Унăн таса нефть илмелли пĕртен-пĕр çĕршыв — Румыни çеç юлнă.

Анчах Румынин нефть продукчĕсем Германие сутас тĕлĕшпе ĕлĕк те пысăк мар вырăн йышăнса тăнă. Германия ютçĕршывсенчен илсе тăнă нефть хушшинче Румыни нефчĕ 9% çеç йышăнса тăнă. Румынин нефть промышленноçĕ начарланнăçемĕн çав хисеп чакса пынă. Çакна кăтартса пани те çителĕклĕ: 1936 çулта Румынире 8,7 миллион тонна, 1937 çулта — 7,15 миллион тонна, 1938 çулта 6,6 миллион тонна нефть кăларнă. Кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче Румынири нефть промыслисем 1.294 пин тонна çеç кăларнă.

«Германия Румынипе унăн нефть кăларакан вырăнĕсене туртса илсен те, вăрçă вăхăтĕнче Германие кирлĕ нефте, уйрăмăнах унăн союзникĕн — Италийĕн горючи пĕртте çуккине шута илсен, çителĕклĕ нефть пама пултараймасть», тесе çырнă 1937 çулта Англире тухса тăракан «Трехмесячник королевского воздушного флота» ятлă журнал.

Анчах Германия нефть илсе тăма пултаракан пĕртен-пĕр çăлкуçа совет авиацийĕ питех те вăйлă аркатать. Пирĕн самолетсем Плоешти районне илан вĕçсе пырса бомбăсем пăрахни Германи çарне горючи парса тăракан çав пĕртен-пĕр çăлкуçа та ĕçлеме май памасть. Плоештипе Констанцăри нефть склачĕсем çунаççĕ, çапла вара Германи командованийĕ Румынирен çаратса илнĕ нефтьпе пуйма ĕмĕтленнисем пуçа ларчĕç.

Германия халĕ ĕнтĕ вăрçăччен хатĕрленĕ нефтьпе бензин запасĕсем çине тата синтетически бензин тăвасси çине çеç шанма пултарать. Анчах çав запассем çар валли питех те çителĕксĕр.

Германире хатĕрленĕ тата хăйне пăхăнтарнă çĕршывсенчен туртса илнĕ нефть продукчĕсем çар валли кайса пĕтнĕ. Берлинра, Гамбургра тата ытти хуласенчен упранса тăракан нефте Британи авиацийĕ бомбăсем пăрахса çунтарса янă. Синтетически бензин тăвакан заводсене те Британи авиацийĕ çĕмĕрсе аркатнă, синтетически бензин çара кирлĕ хисепе 20 процент та пама пултараймасть.

Синтетически бензин тăвас ĕçре Германия техника тĕлĕшпе мар, чĕртавар çитменнипе тата çав бензин питех те хакла ларнипе пысăк йывăрлăхсем тӳсет. Синтетически бензин ахаль бензинран тăватă-пиллĕк хут хакларах тăрать. Мотор валли кирлĕ пĕр тонна бензин тума виçĕ-тăватă тонна кăмăр кирлĕ. Искусственнăй бензин ытларах тума кăмăр нумай кирлĕ пулать, апла пулсан шахтăсенче ĕçлеме рабочисем те нумай кирлĕ. Çавна пула çар валли кирлĕ çынсен хисепĕ те сахалланать.

Бензина «хамăр çĕршывсăрах тăватпăр» тесе Геринг кăшкăрса каланă сушăн хăмпи çеç, фашистсен «XX ĕмĕртти мифĕ» çеç пулса тăчĕ. Çав «хамăр çĕршывсăрах тума пултаратпăр» тесе каланине Англи замолечĕн бомбисем аркатаççĕ. Çар валли горючи ытларах та ытларах кирлĕ пулни тата «çиçĕм пек хăвăрт» вăрçă вăраха тăсăлни фашистсене пăшăрхантарма тытăнчĕ ĕнтĕ. Иртнĕ вăрçăра Румыни çине Фалькенгейн полкĕсем тапăнса кĕнĕ пекех, Германи штабĕ Румыни нефтьне çавăрса илес шухăш тытнă. Германи войскисем пуринчен ытла «союзлă» Румыни нефтьне хапсăннă. Моссулри нефте хăйсен аллине çавăрса илес тесе Германи Иракра переворот тума хăтланнă.

Гитлеровецсем «нефть патне чупни» пĕтĕмĕшпех ăнăçсăр пулса арканнă.

Германи çар экспертчĕ Фриденсбург «лашасемпе тата вак-тĕвек войсковой соединенисемпе усă курмалла» тесе каланине аса илтерме вăхăтлă пулĕ ĕнтĕ, вăл çавна Германин çавтери ӳссе кайнă механизациленĕ çарĕ горючисĕр тăрса юлса тимĕр купи çеç пулса тăма пултарасран шикленсе каланă.

Горючисĕр тăрса юлнă танксене нимĕçсем çĕре алтса лартнине аса илĕрха. Вара эпир фашистсен асса кайнă çарĕ арканса каяс вăхăт инçе марринех ăнланса илĕпĕр. Германи çарĕ горючи çитменнипе пысăк йывăрлăхсем тӳсме тытăнчĕ ĕнтĕ. Çакă ĕнтĕ, ытти çăлтавсемпе пĕрле, унăн пурпĕрех арканса пĕтес самантне сывхартать.

В. КРАМЕР.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Енер Англи авиацийĕ Голланди çыранĕсен çывăхĕнче Германин шатрульре çӳрекен виçĕ карапне шыва путарнă. Англи самолечĕсен ытти соединенийĕсем Çурçĕр Франци çине икĕ хутчен пырса тапăннă, унта вĕсем Лилльри промышленность предприятийĕсемпе ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Британин çурçĕр çыранĕнчи противникăн аэродромĕсемпе войскисене атакăланă, вĕсем çине тупăсемпе пулеметсенчен пенĕ.

Августăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Хĕвеланăç Германири Кельнпа Дуисбург çине каллех пырса тапăннă. Икĕ хули çине те нумай бомбăсем пăрахнă. Пысăк пушарсем тухнă. Çавăн пекех Дюнкеркри доксем çине ăнăçлăн пырса атакăланă. Çак операцисенчен Англин 8 самолечĕ хăйсен базисене тавăрăнайман.

Паян ирхине Çурçĕр Франци çинче сывлăшри çалăçу пулса иртнĕ. Çак çалăçу вăхăтĕнче Германин 8 истребительне пĕрсе антарнă, Англи авиацийĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Противник авиацийĕ Çурçĕр-Хĕвелтухăç Шотландири пĕр пункт çине тата Çурçĕр-Хĕвелтухăç Англири икĕ пункт çине пырса бомбăсем пăрахнă. Жертвăсем пур.

Англи авиацийĕн Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, августăн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Сицилири Сиракуза гаванĕ çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Пушарсем çути пĕтĕм порт районне çутатса тăнă. Самолетсем çинчен пăрахнă бомбăсем тăшманăн гаваньрисене тăракан суднисене сиенленĕ. Çав кунах Англи самолечĕсем Пассеро мысăн районĕнче казармăсем çине бомбăсем пăрахнă. Унта вăйлă взрыв пулнă, юлашкинчен пысăк пушар тухнă.

Енер Англи истребителĕсем противникăн Сиракуза гаванĕнче тăракан самолечĕсем çине пулеметсенчен пенĕ. Пĕр гидросамолетне пĕтерсе тăкнă, ытти темиçе самолетне сиенленĕ.

Чехословакири фашистла террор

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германия Совет Союзĕ çине тапăннăранпа, Чехословакире ССР Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнăшăн 10 пин çынна гестапо арестленĕ. Германи влаçĕсем каланă тăрăх, Чехсен интеллигенцийĕн представителĕсене, концентрацилле лагерьсене хупса лартнăскерсене, вĕлерсе пĕтереççĕ.

Хĕвелтухăç фронтне ăсатма продуктсем пухса илнĕ пирки Чехословакире апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен питĕ начар. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх выçлăх сарăлса кайнă.

Де Голль генералăн эсминецĕ Панама каналĕн зонине пырса çитнĕ

НЬЮ-ИОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Панамăран пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генералăн «Ле триомфан» ятлă эсминецĕ Кристобале (Панама каналĕн зони) пырса çитнĕ. Çакă вăл де Голль генералăн Панама каналне пирвайхи хут пынă çар карапĕ пулса тăрать.



Америка Англие пулăшни

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Англин сывлăш-çар вăйĕсем валли Америка шанă «Вĕçекен крепость» ятлă бомбардировщик. Бомбардировщик сехетре 300 миль хăвăртлăхпа вĕçет, 3500 миль инçете вĕçме пултарать, сывлăша 36000 фут çӳллĕш хăпарать, çунаттисен тăршшĕ 105 фут, вăрăмĕшĕ 70 фут, çӳллĕш 15 фут. Хăйĕн çине темиçе тонна бомбăсем илме пултарать.

(ТАСС фотохроники).

Австрире фашизма хирĕçле шухăш-кăмăл вăйланса пырать

НЬЮ-ИОРК, августăн 19-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатра Австри журналисчĕн статьине пичетлесе кăларнă. Журналист хăйĕн статьинче Венăра пурăнакансенчен нумайĕшĕ национал-социалистсене хирĕç, тесе пĕлтерет. Венăра пурăнаканченчен нумайĕшĕ вăрçăра вилнĕ. Венăри машни çемье хăйĕн пĕр членне çухатнă. Австри салтаксĕсене Норвегире восстани тунăшăн пере-пере вĕлернĕ. Австри часĕсене Германи офицерĕсем ертсе пыраççĕ. Австрирен килнĕ çынсем каласа панă тăрăх, Венăра Австри салтакĕсене вĕрентекен Германи офицерĕсем вĕсене «юлхав сыснасем» тата «Австри идиочĕсем» тесе чĕнеççĕ. Австрин нумай салтакĕсем хăйсене хăйсем вĕлереççĕ. Вадецкри казармăсенче пĕр каçра ултă салтак хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Январь уйăхĕнче Сименск тата Шукерт заводра кашни кун 12-шер сехет ĕçлемелле тунă. Рабочисем забастовка пуçарса янă. Гестапо забастовкăна путарса лартнă, забастовка тăвакансене пурне те арестленĕ, ĕç укçине 10 процент чакарнă тата 12 сехет çурă ĕçлемелле тунă. Халăх фашистсен хаçачĕсене çыранса илмест. Австриецсем Гитлер радио тăрăх тухса каланисене итлесшĕн мар, çав вăхăтрах пиншер çынсем ютçĕршывсенчи радиопередачăсене вăрттăн итлеççĕ. Австрире Венăри имперски наместникне фон Шигаха хирĕç демонстрацисем час-часах пулса иртеççĕ. Австрири халăх, — тесе çырать юлашкинчен автор, — хăйĕн аллисене чăмăртаса фашистсене çапса аркатас кунна кĕтет.

Венгрипе Румыни хушшинчи отношенисем çивĕчленсе пыни

Швейцаринчи тĕплĕн пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Венгрипе Румыни хушшинчи отношенисем хытăрах та хытăрах çивĕчленсе пыраççĕ. Темиçе çул хушши ĕнтĕ Трансильванишĕн пыракан хирĕçӳ юлашки вăхăтра тата хытăрах сарăлса кайнă.

Икĕ çĕршыв хушшинче пыракан хирĕçӳше Гитлер усă курать. Венгри васкавлăн унăн кăмăлне тултараймасан, вăл Çурçĕр Трансильванине Венгрирен туртса илсе, румынсене тавăрса пама сăмах парать. Нацистла фюрера унăн Румынири лакейĕсем юраймасан, вăл вара ĕçе тепĕр майлă тăвать, хăйĕн блокреннех пыракан шантажла меслетĕсемпе усă курать, Румынин Кăнтăр Трансильванине тытса илме сăмах парать.

Венгрири влаçра тăракан çынсенчен нумайĕшĕ хăйсем Кăнтăр Трансильванине Венгрине пама ыйтни çинчен уçăнах калаççĕ.

Румынири влаçра тăракан çынсем Çурçĕр Трансильванине тата Венгрин ытти районĕсене те, Тисса юханшывĕ таранченех Румыни аллине пама ыйтаççĕ.

Кăçал çуркунне Çурçĕр Трансильванинче Румын рабочийĕсене ĕçрен массăллăн кăлара-кăлара янă. Халĕ калăçĕ румын рабочийĕсене ĕçрен кăларса яма тытăннă. Нумай румынсене предприятисенчен хăваласа янă.

Румынсем те хăйсен енчен парăмра тăрса юлмаççĕ. Вĕсем Кăнтăр Трансильванинче пурăнакан венгерсем тĕлĕпше репрессиллĕ ĕçсем тăваççĕ. Тимиссара хулинче Румыни полицийĕ, вăрттăнла майпа сăтăрла ĕçсем туса цурăннă тесе, малтă венгерсене чылайĕшне арестленĕ, нумай рядовой венгерсене, Румынире пурăнаканскерсене, Венгрине ирĕксĕр куçараççĕ, анчах вĕсене Венгринче те йышăнасшăн мар.

(ТАСС).

Вейган Франци кабинечĕпе хирĕçсе кайни

НЬЮ-ИОРК, августăн 17-мĕш. «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: пысăк вырăнта ĕçлекен çынсем каланă тăрăх, Вейган, халĕ Вишине пырсан, Франции Çурçĕр Африкăри территорине уйăрма е Çурçĕр Африкăри тата Атлантикăри базăсене Германине пама килĕшмен.

Виши базăсене Германине парсан, Вейган Франци правительствипе сыхăну тытма пăрахать, тесе шутлаççĕ.

Америкăра хĕçпăшалсем туса кăларас программăна çĕнĕрен ӳстерни

Рузвельтпа Черчилль Англипе Совет Союзне пулăшу параççине хăвăртлатма йышăннă май, Америкăри официальнăй çынсем Америкăра хĕçпăшалсем туса кăларас программăна çĕнĕрен чылай ӳстерес ыйтăва сӳтсе-явнă. Çак тĕллеве пурнăçлама 50 миллиард доллар укçа уйăрса хунă. Юлашки вăхăтра танксем, авиаци, çар валли тата ытти хĕçпăшалсем туса кăларакан çĕнĕрен нумай заводсем тунă. Çапла шутлаççĕ: тепĕр çулталăкран та калрах Америкăра тар туса кăларасси 1000 процент, пĕчĕк калибрлă хĕçпăшалсем валли боеприпассем туса кăларасси 1200 процент ӳсет.

Америкăри «Джорнел оф коммерс» хаçат çапла çырать: çак çулталăк вĕçĕнче Америкăра кашни уйăхра 2500 самолет туса кăлармалла. Кăçалхи июль уйăхĕнче 1460 самолет туса кăларнă.

Авиаци промышленноçĕнче çулталăк çурă каярах 36 пин çын ĕçленĕ пулсан, халхи вăхăтра 500 пин çын ĕçлеççĕ. Халĕ çĕнĕрен тăвакан авиаци заводĕсем пĕтĕмпе 16 миллион тăваткăл метр çĕр лаптăкне йышăнаççĕ.

Малалла хаçат, станоксемпе алюминий туса кăларас производство сарăлса пыни çинчен çырать. (ТАСС).

Италире заговорла организацисем тунă

Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Италири тĕрлĕ хуласене—Турина, Милана, Болоньене тата ытти сене те юлашки кунсенче Германири шалла нацистсем ертсе пыракан фашистла штурмовиксем тата охраннăй отрядсем членĕсем нумай пынă. Çак мерăна Италири шалти лару-тăру çивĕчленсе пынинчен Гитлер хăраса ӳкнĕ пирки йышăннă, тесе çирĕплетсе параççĕ. Çĕршывăн пысăк центрĕсенче чылайĕшĕнче фашистла режима хирĕç выступленисем пулса иртнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

Вырăнти полици влаçĕсем чăннипе Германи командованине пăхăнса тăраççĕ. Çавна май фашистла милици речĕсем хушшинче кăмăлсăрлăх ӳссе пырать. Италире заговорла пысăк организаци йĕркеленни çинчен, ку организаци Муссолинине сирпĕтсе антарас тĕллеве тытни çинчен нумай хыпарсем çӳреççĕ. (ТАСС).

Румыни çухатăвĕсем

Турцири Стамбул хулине пынă çынсем каланă тăрăх, Румыни влаçĕсем Бухарестра госпитальсем нумай тăвасшăн мар пулнă, анчах хулана илсе пынă аманнă румын салтакĕсемпе офицерĕсем 40 пин çын ытла шутланаççĕ. Нумай шкулсенче госпитальсем туса хунă, çавна пула шкулсем вĕренӳ çулне сентябрь уйăхĕнче пуçăнма пултараймаççĕ. (ТАСС).

Францири чугунçулсем çинче Германие хирĕçле саботаж тăваççĕ

НЬЮ-ИОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Париж патне пыракан чугунçулсем çинче саботаж тăвасси вăйланнă, вăл Парижри продовольстви запасĕсене хăрушлăх кӳрет. Полици саботаж тăвакансем çинчен пĕлтерсе тăрса, вĕсене тăрă шыв çине кăларнăшăн пĕр миллион франк награда пама пулнă.

Республикăри уйăхирсенче

Кĕракине тухрĕç

ИЕПРЕÇ. Ситес çулта вăйлă тырпул туса илессине кĕракине чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерни татса парать. Çавна шута илсе районри колхозсем кĕракине лайăх хатĕрленнипе тухрĕç.

Кĕракине хатĕрленсе пынă май çĕртме уйне 139.687 лав тислĕк кăларнă, 932 центнер фосфорит çăнăхĕ сапса çĕре çемĕçтернĕ. Ирхи çĕртме тунă хыççăн, вăхăтра культиваци туса тăнă. Çапла тунипе çĕртме уйĕнче çумкурăксене çитĕнме паман.

«Правда», «Большевик», «Молния», «Красный фронтовик» т. ыт. колхозсем кĕрхи тырăсене акмалли çĕре лайăх ĕçлесе хатĕрленипе çултан çул пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. «Правда» колхоз иртнĕ çулта ыраш гектартан 9-шар центнер туса илнĕ пулсан, кăçал 19 центнер пухса илет. «Большевик» колхоз гектартан 16-шер центнер пухса кĕртет.

Çак асăннă колхозсем çитес çулта та вăйлă тырпул туса илессе шанма пулать. Вĕсем кĕракине лайăх хатĕрленсе тухрĕç. «Правда» колхоз ыраш акмалли уя 3940 лав, «Большевик» колхоз 5320 лав тислĕк кăларнă. Кунсăр пуçне фосфорит çăнăхĕпе çĕре çемĕçтернĕ. Акасса пĕтĕмпех таса, сортлă вăрлăхпа, ретлĕ машинăсемпе акса хăвараççĕ. Агрономи кăтартса панă тăрăх, ирхи çĕртме тунă вырăна тепĕр хут сухаламасăр культиваци туса акмалла. Çавăн пек акаççĕ «Правда» колхозра. Çав методпа акни—пĕр енчен, çĕре типсе кайма памасть, тепĕр енчен ĕç вăйне перекетлеме, ака срокне кĕскетме май парать.

Районра массăллă кĕраки августăн 14-мĕшĕнче пуçланчĕ. Кĕракин малтанхи кунĕсенче районĕпе 96 гектар акнă. Агротехникăна пăсни пулман, пур колхозсенче те ретлĕ машинăсемпе акаççĕ. Колхозсенчи пур пек сеялкăсемпе пуринпе те туллин усă кураççĕ. «Молния» колхозăн 4 сеялка пур, вĕсем пурте ĕçре. Петровпа Михайлов сеялщиксем ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

Кĕракине районра чи малтан «Молния», «Правда», «Большевик», «Красный фронтовик», «Красный партизан» колхозсем тухрĕç. «Красный партизан» колхоз кĕракине тухас умĕн кăçалхи çĕнĕ тырра çапса вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Ку колхоз пĕтĕмпех кăçал пухса илнĕ çĕнĕ вăрлăхпа акса хăварать.

Колхозсенче, бригадăсенче кĕракине кăтартуллă ирттересситĕн ăмăрту сарăлса пырать. «Красный фронтовик» колхоз кĕрхи тырăсене 6 кун, «Молния» колхоз 5 кун хушшинче акса пĕтересситĕн кĕрешеççĕ.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Пур колхозсем те акма тухнă

КУСЛАВККА, августăн 20-мĕш. (Телефон тăрăх). Енерхи куна районĕпе кĕрхи тырăсене 5.586 гектар, пăрса йышши культурăсене 323 гектар вырса пуçтарнă. Тырă вырса пĕтернĕ колхозсем пурте акма тухнă. Пурĕ 400 гектар ытла акнă. Акиччен малтан вăрлăхсене формалинпа протравить тăваççĕ. Пур колхозсенче те сеялкăсемпе туллин усă курса ĕçлеççĕ.

Паян хăшпĕр колхозсем хăмăл сухалама тата кĕрхи çĕртме тума тухрĕç.

Н. КОПЫЛОВ.

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Таса вăрлăхпа акатпăр

ИШЛЕЙ. Сыбайкасси ялсоветĕнчи «Вускасси» колхоз ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курнине пула пур ĕçсене те вăхăтра туса пырать. Тырă хума 7 амбар куçарса юсанă, машинăсем лартмалли сарай туса пĕтернĕ, çĕнĕрен витнĕ итем тунă, пысăк пĕве пĕвелерĕç, халĕ сысна вити тата правлени çурчĕ лартма тытăннă. Çак ĕçсене пĕтĕмпех пĕр вăхăтра, тырпулсене пуçтарса кĕме тухас умĕн тунă. Колхозра халь тырă выраççĕ, авăн çапаççĕ тата кĕрхи тырăсене акма тухнă. Кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех машинăсемпе акса хăваратпăр. Акма хатĕрленĕ вăрлăхсем пысăк пахалăхлă вĕсене темиçе хутчен те алласа тасатнă тата формалинпа протравить тунă.

С. МАМАЕВ.

Ишлейкасси колхозĕнче

ИШЛЕЙ. Андреев юлташ ячĕпе тăракан колхозăн пур бригадисем те кĕрхи тырăсене вырса пуçтарчĕç. Пур ĕçе те звеносем урлă туса пынă. Чылай колхозниксем кулленхи ĕç нормине икĕ хут тултарса ĕçленĕ.

Августăн 14-мĕшĕнче государствăна 6 центнер çĕнĕ тырă леçсе панă. Пур бригадăсенче те кĕракине тухнă.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртетпĕр

ИЕПРЕÇ. Пирĕн колхоз хăйĕн ĕçĕсене пĕтĕмпех вăрçă вăхăтне майлă улăштарса çĕнетрĕ. Кашни колхозник хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тăван Хĕрлĕ Çара пулăшса пырать. Колхозниксем халь чи ответлă тапхăрта кĕчĕç. Анса пулнă тырпула вăхăтра тата пĕр пучах тăкса хăвармасăр пуçтарса кĕме мобилизациленнĕ. Ĕçлеме пултаракан пур колхозниксем те уйăхир ĕçĕнче ĕçлеççĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци ĕç вăйне организацилеме пулăшрĕ. Кашни бригада çумнех коммунистсене çирĕплетсе тухнă. Вĕсем пур ĕçсемшĕн те ответлă пулса ĕçлеççĕ.

Парторганизаци ертсе пыннипе, агитацине массăллă ĕçе куллен туса пыратпăр. Уборкăна тухнăранпа 6 номер стена хаçачĕ кăларнă. Агитаторсем хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Иккĕмĕш бригадăра ĕçлекен В. Михайлова учительница колхозниксене кулленех Совет Информаци Бюровăн пĕлтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса парать.

Тырпула кĕске срокра пуçтарса кĕртес шутпа, колхоз производствин ытти отраслисенче ĕçлекен работниксене те конюхсене, фермăра тата правлени канцелярийнче ĕçлекенсене уй ĕçне тума хутшăнтарнă.

Бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кашни колхозник ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешет. В. Тимофеева, Шемякина, А. Максимова т. ыт. юлташсем пĕр кунхи нормăна 120—130 процент тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех, иккĕмĕш бригадăра ĕçлекен А. Гороховăпа А. Попова юлташсем те кĕлте сыхнă çĕрте кулленхи ĕç нормине 150 процент тултарса пыраççĕ. Гороховăпа Попова юлташсем кăçалччен ялхуçалăхĕнче ĕçлесе курман. Апла пулин те, вĕсем ĕçе питĕ хăвăрт вĕренсе çитрĕç.

Шкулта вĕренекен ачасенчен уйăрăм звено тунă. Çак звено вырса пуçтарнă çĕр лаптăкĕ çинче тырă пучахĕсене пуçтарсах пыраççĕ.

М. СЕМЕНОВ.

«Красный фронтовик» колхоз çумĕнчи пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Авăн çапаççĕ

Иккĕмĕш Вăрманкасси ялсоветне кĕрекен «Камай» колхоз (Çĕрӳ р.) кĕрхи тырăсене пысăк пахалăхпа вырса пуçтарчĕ. Лев Тарасов ертсе пыракан пĕрремĕш бригада планпа пăхнинчен пĕр кун маларах вырса пĕтерсе иккĕмĕш бригадăна пĕр кун тырă вырса панă.

Колхозра халь пур бригадăсем те кĕрхи тырăсене акма тухнă. Государствăна пама тата вăрлăхлăх авăн çапаççĕ. 1941 çулпăн государствăна тулă парса татнă. Кунсăр пуçне 32 центнер ыраш леçсе панă.

Ф. КИРИЛЛОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КУÇĂРСЕН
УЛАТĂРТИ ШКУЛĔ
1941—42-мĕш çулта вĕренме илет.
Шкула 8 çултан пуçласа 11 çула çитнĕ, Чăваш республикинче пурăнакан куçăр ачасене илеççĕ.
Заявленисемпе пĕрле—хăçан çуралнине тата сывлăх мĕнлине кăтартакан справкăсем тăратмалла.
Вĕренме илнĕ ачасене шкултанах тăрантараççĕ тата общежити параççĕ.
Шкул адресĕ: г. Алатырь, село Чуварлей.
Дирекци.
2—1

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен августăн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Германи çарĕнчи офицерсен корпусĕнче политикăпа мораль тĕлĕшĕнчен ĕç мĕнле тăнă пирки чарăнса тăнă.

Германи офицерстви яланах хăйĕн хуçини ăшĕнче питĕрĕнсе пурăнакан реакциллĕ ушкăн пулса тăнă. Империализмлă пĕрремĕш вăрçăччен офицерсен корпусне дворянсем кăна кĕме пултарнă. Империализмлă пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче, офицерсен составĕнче питех те пысăк çухатусем пулнă май, офицерсен корпусне буржуазипе интеллигенци представителĕсене те хутшăнтарма пуçланă. Германине пĕрремĕш вăрçăра çапса аркатса, Германи çарне салатса янă хыççăн, çар уставĕсемсĕр пуçне тата аялта тăракан чиновнике турткалассисĕр пуçне, урăх нимĕн çинчен пĕлмен офицерсем вуншар пинĕн ĕçсĕр тăрса юлнă. Офицерсен çак ушкăнĕсенчен нумай çĕршывсен çарĕсем валли инструкторсем тата вăрттăн ĕçлекен террористла организацисем валли кадрсем тара тытнă, вĕсем Веймар республикин тапхăрĕнче прогрессивлă государственнăй деятельсемпе революциллĕ рабочисене кĕтесрен пере-пере вĕлернĕ.

Гитлер влаçа хăй аллине çавăрса илни офицерсен корпусĕ тата националистла парти пĕр-пĕрин тĕлĕпше хăйсене мĕнле тытказас ыйтăва тӳрех кăларса тăратрĕ.

Рейхсвер офицерстви Гитлера туслăн мар кĕтсе илни никамшăн та секрет пулса тăмасть. Офицерство Гитлерпа хилĕшкеленĕ, анчах ăна йышăнман. Вара офицерсен корпусне гитлерлатас енĕпе хаяр кĕрешӳ пуçланнă. Çара, Гиммлер агенчĕсемсĕр пуçне, национал-социалистла партин, штурмовой тата охраннăй отрядсен шанчăклăрах членĕсенчен çĕнĕрен çĕнĕ кадрсем ямалы тытăннă. Тепĕр енчен, çăран ертсе пыракан вырăнне сыхласа хăварма Шлейхер, Бредов генералсем пек уйăмах çине тăрса тăрăшакан хăшпĕр генералсене персе вĕлернĕ, ыттисене çар ĕçĕнчен сирсе янă тата арестленĕ.

Гитлер влаçа хăй аллине илнĕ малтанхи кунсенчен пуçласах çар вĕçĕмрен ӳссе пынă май,—авиаци, флот, мотомеханизированнăй чаçсем ӳснĕ май—офицерсем те çавтери нумай кирлĕ пулса пынă. Кивĕ офицерство мĕнпур вакантлă пушă вырăнсене йышăнса çитерме пултарайман, çавна пула вара офицерсен корпусне гитлеровецсем чылай кĕрсе тулнă.

Çĕнĕ офицерсем пырса кĕнĕ малтанхи кунсенчен пуçласах кивĕ тĕп офицерствăпа хăмăр кашкăрсен шайкки хушшинче чĕмсĕр те уççăнах палăракан кĕрешӳ пуçланнă. Çав хăмăр кашкăрсен шайкки Германи çарне политика тĕлĕшĕнчен кăна мар, вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен те ертсе пырас вырăна йышăнма ăмсаннă. Офицерсен корпусĕнче гестапопа национал-социализма хирĕç пыракан кĕрешӳ, Гитлер офицерствăна уголовнăй право тĕлĕшĕпе те привилегиллĕ вырăн панă пулин те, пĕр минутăллăха та лăпланман. Армине тӳрремĕнех гитлерла политикăн орудийĕ туса хунипе офицерство килĕшмен. Офицерсен корпусĕнче—Итали союзник мар, урана çыхса янă кире-пуканĕ пулса тăнине ăнланакан çынсем пулнă, тройственнăй пакта хирĕç тăракан çынсем пулнă тата Германин пĕтĕм тĕнчене çĕнтерсе илме вăй çитес çуккине ăнланакан çынсем пулнă.

Чăн та, Германин çĕнтерĕвĕсем çамрăк офицерсен пуçĕсене кăна мар, ватă офицерсен пуçĕсене те çавăрнă. Пĕр вăхăтлăха çарта шалти кĕрешӳ лăпланнă пек, юлашкинчен çапах та политикăллă шĕрлĕх пулса тăнă пек курăннă. Тĕрĕссипе пăхсан, офицерсенчен пĕр пайĕ офицерсен корпусĕ мораль енчен пăсăлса пынине тарăн хуçануллăха шикленсе сăнаса тăнă, гитлерла Германине тата Гитлер çарне курайманни пĕтĕм тĕнчипе ӳссе пынине чунне ыраттарса тӳссе ирттерсе пынă.

Гитлер, хăй Совет Союзĕ çине тапăнса кĕме шут тытнă чухне, Хĕрлĕ Çар—вăл пысăк противник, тесе калакан немĕнле ăсхакăллă ханаша та илтесшĕн пулман. Икĕ фронтлă вăрçăран тĕрĕс хăракан çынсене вăл итлесшĕн пулман. Немĕç генералĕсем хушшинче, Германишĕн чи хăрушши вăл икĕ фронтпа вăрçмалли вăрçă пулса тăрать, тесе нумай çулсем хушши ĕнентерсе пынă çынсем сахал мар, анчах Гитлер сасартăк хăй ирĕкĕпе Германи çарне çĕнĕ авантюрăна тĕртсе кĕртнĕ, çак авантюра вăл пораженисĕр пуçнимĕн те сунмасть. Ыйтăлăхсем ӳссе пынине пула тата питĕ пысăк çухатусем тӳснине пула офицерсен корпусĕнче национал-социализма хирĕç тăракан традиционăллă кивĕ куравланлăх çĕнĕрен амаланса ӳсет. Офицерсен пĕр пайĕ Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă çине пачах та кăмăллă мар пăхать. Мĕншĕн тесен, Германи Совет Союзĕнчи халăхсене хăйне пăхăнтарма хăтланни шанчăксăр ĕç пулса тăнине ăнланса илме çав офицерсен квалификацийĕсем çителĕклĕ.

Ку тĕлĕшрен, немĕçсен тыткăна лекнĕ пиллĕк офицерĕ—подполковник Гаушильд, капитансем—Риггер, Лоевскипе фон-Вешновский тата старший лейтенант Рикс немĕç офицерĕсем патне çырнă уçă çыру питех те паллă документ пулса тăрать. Çак çыру вăл Гитлерпа тата унăн бандитла политикипе килĕшмен Германи офицерĕсен пĕр пайĕ мĕн шухăшланине пĕтĕм тĕнчене кăтартса парать. Çак документ вăл Германи офицерĕсен корпусĕнче шалти иккĕленӳсемпе хирĕçӳсем пуррине офицерсен пĕр пайĕ тупикран тухма асаплăн çул шыранине кăтартса парать. Германине çăласси—Гитлера аркатассинче, акă мĕн сăрхăнса кĕме пуçлать вăтам немĕçĕн ăнланăвне. Çак çырура кăтартса тана тенденцисем пуррипе паллă пулса тăракан офицерсен корпусĕ—хыттăнах чире ернĕ, мĕншĕн тесен унăн вăраха тăсăлнă вăрçă ĕçне туса пыма тата çĕнтерме май паракан моралле-политикăллă пĕрлĕх çук. Çак çыру вăл Гитлер тунă тата пĕтĕм этемлĕхе хирĕç янă вăрçă машини ишĕлсе пынин палли пулса тăрать. Анчах çав машина хăй тĕллĕнех ишĕлсе каймасть; Хĕрлĕ Çар тата ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ хăватлăн пыра-пыра çапнипе ишĕлсе каять вăл.

«Интерконтинент Ньюс» корреспонденчĕ—Жи Жаннет Вивер: «Генерал Араки «Кокумин» хаçат представительне панă интервью çине—генерал Араки, японецсем 1918 çулта Çĕпĕре оккупациленине аса илсе, çавăн пек ларутăру вăл халь те сиксе тухма пултарнă пулĕччĕ тесе калакан, ун чухне вĕлермеллех килсе çапма май пулманнишĕн хăй пăхăрханни çинчен калакан тата пĕтĕм ĕçсем çурмаçул çинче чăрăнса ларни çинчен калакан интервью çине эсир мĕнле хакласа пăхатăр» тесе ыйтнине хирĕç, Лозовский юлташ çапла ответленĕ:

Араки генерал нихăçан та ытлашши именӳллĕ пулман, çавăнпа та вара вăл хăйĕн чухăн тата Японишĕн хăрушлăх кӳрекен шухăшĕсене яланах государство мудроçĕн юлашки сăмахĕ тесе шутланă. Араки генералăн историллĕ асилĕвĕсем, тен кăмăллет, унăн асăмне чыса кăлараççĕ те пулĕ, анчах вăл тĕнчери лару-тăрăва ăнланма пултарнине тата 1941 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче нейтралитет пирки пакт çинче никĕсленсе пулнă Японипе СССР хушшинчи отношенисене ăнланма пултарни çинчен калаçаççĕ вара. Историллĕ асилӳсене хирĕç, çак тĕлĕшпе генералсем тата министр пулнă çынсем ĕçлеççĕ пулсан та, немĕнех те калаçмалли çук, анчах сĕнес килет, пысăк вырăнта тăракан авторсем, иртнине аса илнĕ чухне, хăйсен çĕршывĕн хальхи тата пулас ĕçĕсем çинчен маса ан кайччăрччĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.
НТ 5541.
Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 98 84 п. л.